им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитетĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

№ 30 (9709) | 1956 çул, Февраль 11, шăматкун | 38-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Чăваш АССР-ĕн бюджечĕ

Паян «Коммунизм ялавĕ» хаçатра Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджечĕ çинчен йышăннă закон пичетленет. Çак документ Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн республикăн социализмла экономикипе культурине малалла аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшнине кăтартса парать.

Чăваш АССР-ĕн бюджечĕн пысăк пайне промышленноçпа ялхуçалăхне малалла аталантарма уйăрса панă. Коммунальнăй предприятисен ĕçне лайăхлатма тата хуласен благоустройстви валли 18 миллион тенке яхăн уйăрса панă, çакă вăл 1955 çулхинчен 82,5 процент ытларах пулать. Кăçал капитальнăй строительство ĕçĕсем вăйлăн сарăлса каяççĕ. Социальнă-культурăлла ĕçсем валли 312 миллион тенке яхăн расходлама палăртнă, çав шутран 198 миллион тенкĕ çутĕç валли, 18 миллион тенкĕ ытла—ача сачĕсемпе ача çурчĕсем валли, 14,5 миллион тенкĕ—культурăпа çутĕç учрежденийĕсене тытса тăма, 106,9 миллион тенкĕ сывлăха сыхлас ĕç валли уйăрса панă. Социальнă-культурăлла ĕçсем валли уйăрса панă укçа-тенкĕ хисепĕ 1955 çулхинчен 25,7 миллион ытларах пулать. Çакă вăл ĕçсыннисен пурнăçне тата лайăхлатма, рабочисемпе хресченсен тата интеллигентсен культурăлла шайне ўстерме чылай пулăшать.

Кăçалхи хуçалăхпа культура строительствин аслă программине чыслăн пурнăçлас тесен, бюджета мĕнпур тупăшсен çăлкуçĕсенчен укçа-тенкĕ çителĕклĕ хывмалла. Ытти çулсенчи пекех, бюджетăн тĕп тупăшĕсем промышленность, суту-илў, коммунальнăй хуçалăх тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсем парса тăракан укçа-тенкĕ пулаççĕ. Çавна май предприятисен, МТС-сен, колхозсемпе совхозсен ĕçне малалла лайăхлатассишĕн, тавар çаврăнăшне ўстерессишĕн тăрăшмалла. Государство планĕ—кашни предприятишĕн закон. Предприятисенчи оборудованипе туллин усă курмалла, ĕç тухăçлăхне çине тăрса ўстермелле, производство планне хисепенĕпе кăна мар, пахалăх енĕпе те ăнăçлă тултармалла, перекетлĕх режимне çирĕп тытса пымалла, бюджета мĕнпур тўлевсене вăхăтра хывмалла.

Анчах хăшпĕр предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем çав требованисене манăça хăвараççĕ. Строительство материалĕсем хатĕрлекен промышленность управленийĕн (начальникĕ Репкин юлташ) предприятийĕсем иртнĕ çулта планпа палăртнинчен 2.188 пин тенкĕлĕх продукци сахалтарах туса кăларнă. Çав предприятисенче производство хăвачĕсемпе тухăçлă усă курмаççĕ, ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Строительство материалĕсем хатĕрлекен промышленность управленийĕн предприятийĕсем продукцин хăйне ларакан хакне планпа палăртнинчен ытларах ўстернĕ.

Коммунальнăй хуçалăх министерствин (министрĕ Русин юлташ) предприятийĕсенче усăсăр тăкаксем нумай тăваççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ Атăл леш енчи электростанци кăна планпа палăртнинчен пĕр миллион тенкĕ ытла тупăш сахалрах илнĕ. Çак министерствăн предприятийĕсем бюджета малтан палăртнинчен 2.877 пин тенкĕ укçа сахалрах хывнă.

Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин (министрĕ Калинкина юлташ) тата Топливо промышленность управленийĕн (начальникĕ Соколов юлташ) предприятийĕсенче те пысăк çитменлĕхсем пур.

Промышленноçа малалла хăватлăн аталантарас тесен, КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕн решенийĕсене çине тăрса пурнăçа кĕртмелле, организацилле ĕçе лайăхлатмалла, предприятисен ĕçне пĕлсе, конкретлă ертсе пымалла. Çĕнĕ техникăпа малта пыракан технологие производствăна кĕртесси предприятисен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнмалла.

Бюджета тупăшсем енĕпе ăнăçлă пурнăçлас тесен, тавар çаврăнăшне малалла ўстерсе пыни кирлĕ. Анчах республикăри суту-илў министерстви (министрĕ Гаврилов юлташ) тата Чăвашпотребсоюз (председателĕ Харитонов юлташ) халăх куллен кирлĕ таварсем ыйтнине çителĕклĕ тивĕçтереймесçĕ-ха. Уйрăмах вырăнти тата кооперации промышленноçĕ туса кăларакан таварсене халăха сутассине начар йĕркеленĕ. Суту-илў организацийĕсенче государство укçи-тенкине усăсăр тăкакланипе пĕтермен, растратăсем пулаççĕ. Тавар çаврăнăш планне тултарассишĕн тата иртерсе тултарассишĕн, бюджета укçатенкĕ вăхăтра хывассишĕн кĕрешесси—суту-илў работникĕсен чыслă тивĕçĕ.

Бюджет тупăшĕсен шутне халăхран пухакан тата колхозсен тупăшĕнчен илекен укçа-тенкĕ те кĕмелле. Иртнĕ çулта налогсем пухмалли плана кашни кварталтах тултарса пынă. Çакă вăл республикăри ĕçсыннисен ăнланулăхĕ ўснине, вĕсем коммунизм строительствинче çĕнĕ ўсĕмсем тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçленине кăтартса парать. Анчах хăшпĕр районсенчи финанс органĕсем, уйрăмах Вăрмар, Çĕмĕрле, Октябрьски, Шăмăршă, Шăхасан тата Тăвай районĕсенчи финанс органĕсем, халăх хушшинче ăнлантарулă ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен, çавна пула ку районсенче недоимкăсем чылай. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем бюджета тупăшран илекен налогсене вăхăтра тўлеме тăрăшмаççĕ, финанс дисциплинине пăсаççĕ.

Управлени аппарачĕн ĕçне лайăхлатни тата управлени аппаратне тытса тăма каякан расходсене чакарни пысăк вырăн йышăнать. Анчах хăшпĕр çĕрте управлени аппаратĕнче штатран ытлашши работниксем нумай ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта районсемпе хуласен бюджечĕсем тăрăх, управлени аппаратне тытса тăма 185 пин тенкĕ ытлашши расходланă.

Çакăн пек çитменлĕхсене халех пĕтермелле, ытлашши тăкаксем тумалла мар, халăх укçи-тенкине перекетлĕ тыткаламалла.

Чăваш АССР-ĕн бюджетĕнчи цифрăсем республикăри ĕçсыннисене чун-чĕререн савăнтараççĕ, вĕсене производствăра татах хастарлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Республикăри ĕçсыннисем 1956 çулхи—ултăмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕнчи — заданисене ăнăçлă пурнăçлĕç, республика экономикипе культурине çĕнĕ хăватпа малалла аталантарĕç.

СССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕ

Хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем туса кăларассине ўстересси тата хуласемпе промышленность центрĕсенчи халăха сĕт парса тăрассине лайăхлатасси çинчен

СССР Министрĕсен Совечĕ çакна палăртнă: колхозсемпе совхозсенче сĕт суса илессине ўстернĕ май сĕт продукчĕсем туса кăларасси ўсрĕ. Анчах та хуласемпе промышленность центрĕсенчи халăха сĕт тата хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем парса тăрасси халĕ те çителĕклĕ мар-ха. Суту-илў предприятийĕсенче сĕт çителĕксĕрри çакăн патне илсе пырать: чылай хуласенчи колхоз рынокĕсенче, уйрăмах хĕллехи уйăхсенче, сĕт хакĕсем государствăн ваккăн сутмалли хакĕсенчен чылай пысăкрах пулаççĕ.

СССР Суту-илў министерстви, СССР Аш-какайпа сĕт продукчĕсен промышленность министерстви, СССР Госпланĕ тата СССР Госэкономкомиссийĕ хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем туса кăларассине чылай ўстерме тата халăха сĕт парса тăрассине лайăхлатма кирлине тивĕçлипе хакламаççĕ. Çав вăхăтрах сĕт вăл кирлĕ тата чи паха апат-çимĕç продукчĕ пулса тăрать, ăна халăх нумай ыйтать. СССР Суту-илў министерствин тата унăн вырăнти органĕсен сĕтпе тата сĕт продукчĕсемпе суту-илў тăвассине йĕркелессинче пысăк çитменлĕхсем пур.

Хуласемпе промышленность центрĕсенчи халăх валли сĕт тата хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем тăратас ĕçе чылай лайăхлатас шутпа СССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем туса кăларассине чылай ўстерес тата хуласемпе промышленность центрĕсенчи халăха сĕт парса тăрассине лайăхлатас тĕлĕшпе СССР Аш-какайпа сĕт продукчĕсен промышленность министерствине, СССР Суту-илў министерствине, союзлă республикăсен Министрĕсен Совечĕсене мерăсем йышăнма хушас, çапла вара 1956—1957 çулсенче хуласенчи халăх сĕт тата хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем илсе тăрассине пĕтĕм çĕршывра, 1955 çулхипе танлаштарсан, икĕ хутран кая мар ўстермелле пултăр. Государствăн сĕт хатĕрлемелли тата сутăн илмелли планне тултарнă хыççăн пухăнакан, вырăнти снабжени валли союзлă республикăсен Министрĕсен Совечĕсен аллинче юлакан сĕте, пуринчен ытларах, хăймине уйăрман сĕт продукцийĕ туса кăларас ĕçе яни вырăнлă пулать тесе шутлас.

2. 1956 çулта 55 хулара тата вăйлă промышленноçлă 8 облаçра сĕт тата хăймине илмен сĕт продукчĕсем (сĕт çине куçарса шутласа) сутассине, 1955 çулхипе танлаштарсан, 81 процент ўстерес; кунта çакна асра тытмалла:

Мускав, Ленинград, Киев, Баку, Свердловск, Харьков, Горький, Ташкент, Куйбышев, Новосибирск, Тбилиси, Сталино, Челябинск, Рига, Днепропетровск, Дон çинчи Ростов, Хусан, Молотов, Саратов, Сталинград, Омск, Воронеж, Минск, Макеевка, Львов, Ярославль, Ереван, Запорожье, Сталинск, Алма-Ата, Караганда, Иваново, Анат Тагил, Магнитогорск, Тула, Кривой Рог, Уфа, Красноярск, Иркутск, Хабаровск, Кемерово, Владивосток, Таллин, Ворошиловград, Ижевск, Барнаул, Калинин, Вильнюс, Фрунзе, Ульяновск, Кишинев, Шахты, Ашхабад, Петрозаводск тата Сталинабад хулисенче халăха сĕт тата хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем парса тăрассине нумай лайăхлатмалла, çапла вара ку продуктсене халăх ыйтнине, тĕпрен илсен, государствăн хуласенчи суту-илĕвĕ урлă тивĕçтермелле пултăр;

Мускав, Свердловск, Сталино, Ворошиловград, Челябинск, Кемерово, Молотов тата Горький облаçĕсенчи хуласемпе промышленноçăн центрĕсенче сĕт тата хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем сутассине 1,5—2,5 хут ўстермелле.

Çакăнпа пĕрлех çу тата сыр туса кăларассине ўстересси çинчен сĕнўсем хатĕрлеме хушнă.

3. СССР Аш-какайпа сĕт продукчĕсен промышленность министерствине 1956 çулта хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем татах 1 миллион тонна (сĕт çине куçарса шутласа) туса кăларма задани хушса парас.

4. Союзлă республикăсен Министрĕсен Совечĕсене 1956 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен, СССР Ялхуçалăх министерствипе, СССР Аш-какайпа сĕт продукчĕсен промышленность министерствипе тата СССР Суту-илў министерствипе килĕштерсе, сĕт тата хăймине уйăрман сĕт продукчĕсем сутас тĕлĕшпе çирĕплетсе паракан заданисене шута илсе, 2-мĕш пунктра асăннă хуласене сĕт тăратакан районсен çĕнĕ списокне çирĕплетме хушас.

5. Хуласемпе промышленность центрĕсене сĕт тăратакан районсенче государствăн сĕте сутăн илмелли планне иртерсе тултарма хавхалантарас шутпа СССР Суту-илў министерствине çапла тума хушас: 1956 çулта граждансем государствăна хуласенче сутакан сĕтшĕн вĕсене çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх сутма рынок фончĕсенчен выльăх апачĕ валли 300 пин тонна концентратсем уйăрса памалла, çакна СССР Аш-какайпа сĕт продукчĕсен промышленность министерствипе килĕштерсе тумалла.

6. СССР Аш-какайпа сĕт продукчĕсен промышленность министерствине çапла тума хушас:

а) хăймине уйăрман сĕт продукчĕсен пĕтĕм хисепĕнчен СССР Суту-илў министерствине çакăн чухлĕ тăратмалла:

сĕт—55 процентран кая мар;

диэтăлла сĕт-çу продукчĕсем—240.000 тонна; 0,25 литр кĕрекен бутылкăсене тултарнă хăйма—виçсе тултарнă хăйман пĕтĕм хисепĕнчен 50 процентран кая мар;

б) 1956 çулта парафинлă хут бутылкăсене тултарнă сĕт туса кăларассине Мускавра—кунне 30 тонна таран, Ленинградра—кунне 30 тонна таран тата Киевра—кунне 15 тонна таран ўстермелле, çавăн пекех шкулсенчи буфетсем валли 0,25 литр кĕрекен кĕленче бутылкăсене тултарнă сĕт туса кăларассине организацилемелле.

7. СССР Аш-какайпа сĕт продукчĕсен промышленность министерствине, СССР Суту-илў промышленность министерствине тата СССР Автомобиль транспорчĕпе шоссе çулĕсен министерствине çапла тума хушас: сĕте тата сĕт продукчĕсене суту-илўпе обществăлла апатлану предприятийĕсене централизациленĕ йĕркепе илсе пырассине организацилесси çинчен пĕр уйăх хушшинче сĕнўсем хатĕрлесе, вĕсене çирĕплетме СССР Министрĕсен Советне тăратмалла.

8. СССР Суту-илў министерствине çапла тума хушас: хуласемпе промышленность центрĕсенче сĕт продукчĕсемпе анлă суту-илў тума 1956 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче сĕт сутмалли специализациленĕ çĕнĕ магазинсем 120, апат-çимĕç магазинĕсенче сĕт тата сĕт продукчĕсем сутмалли уйрăмсем 1.000, пурăнмалли пысăк çуртсем вырнаçнă çĕрте сĕт сутма холодильниклĕ павильонсемпе палаткăсем 150 тата кафе-молочнăйсем 100 уçмалла.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн сессийĕнче

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн февралĕн 9-мĕшĕнчи кăнтăрлахи ларăвĕнче Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджечĕ тата 1955 çулхи бюджета пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх пренисем пуçланнă. Чи малтанах Синицын депутат сăмах илнĕ.

— Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕнче пăхса тухма тăратнă бюджета,—тенĕ вăл,—ултăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕррремĕш çулĕнчи халăх хуçалăх планĕпе килĕштерсе тунă.

Синицын депутат хăйĕн сăмахĕнче республикăри Сывлăх тата Çутĕç министерствисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартса панă. Сывлăх министерстви медикаментсен, инвентарь, апат-çимĕç тунмма тата ытти ĕçсем валли уйăрнă укçа-тенкĕпе туллипе усă курайман. Капитальнăй строительство валли уйăрнă укçатенкĕрен 47,7 пин тенкипе, çуртсене тĕпрен юсама уйăрнă укçа-тенкĕрен 34 пин тенкипе усă курман.

Малалла оратор Канаш районĕ 1955 çулхи бюджета мĕнле пурнăçлани çинчен калаcа панă.

— Бюджета пурнăçламалли чи кирлĕ услови вăл,—тенĕ Тимофеев депутат, — мĕнпур предприятисем производство планĕсене вăхăтра пурнăçлани, продукцин хăйне ларакан хакне йўнетни, перекетлĕх режимне çирĕп пăхăнса ĕçлени пулса тăрать. Çапла тăвас тесен, производствăна механизацилемелле. Чкаловски районĕнче пысăк мар предприятисем — промкомбинат, апат-çимĕç комбиначĕ пур, анчах вĕсен механизмсем çук.

Апат-çимĕç комбинатĕнче 19 çын ĕçлет, вĕсенчен 11-шĕ рабочисем, 7-шĕ производствăна тўрремĕнех хутшăнса ĕçлемен çынсем. Çулталăк хушшинче рабочисене ĕç укçи 44 пин тенкĕ тўленĕ, производствăна тўрремĕнех хутшăнса ĕçлемен çынсене вара ĕç укçи 42 пин тенкĕ тўленĕ.

Кондрашин депутат КПСС ХХ-мĕш съездне Улатăр хулинчи ĕçсыннисем ĕçри çитĕнўсемпе паллă туса хатĕрленни çинчен каланă. Хула промышленноçĕ 1955 çулхи плана 105,5 процент тултарнă. Хулана пăхăнса тăракан предприятисемпе промысла кооперацийĕн артелĕсем кăна 1.989 пин тенкĕ таса тупăш илнĕ.

Хулари промышленность предприятийĕсемпе учрежденисенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем КПСС ХХ-мĕш съезчĕ ултăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен проектне анлăн сўтсе яваççĕ.

Кондрашин юлташ хулари электростанцие хăвăртрах туса пĕтерсе ĕçе кĕртме кирли çинчен каланă.

Трибуна умĕнче—Корчагина депутат.

— Çĕмĕрле районĕнчи ĕçсыннисем, — тет вăл,—КПСС ХХ-мĕш съездне хуçалăхпа культура строительствинчи çĕнĕ çитĕнўсемпе кĕтсе илеççĕ. Районти предприятисем 1955 çулта продукци туса кăлармалли плана 102,4 процент, çав шутра союзлă министерствăсене пăхăнса тăракан предприятисем 102 процент, республикăна пăхăнса тăракан предприятисем 107,3 процент тултарчĕç. Çулталăк хушшинче планран иртерсе 5.457 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Анчах хăшпĕр предприятисем, промысла артелĕсем тата колхозсем шалти резервсемпе халĕ те туллин усă курмаççĕ-ха, производство заданийĕсене пурнăçламаççĕ.

Чăваш АССР Госплан председателĕ Людиновский юлташ хăйĕн сăмахĕнче производствăри резервсемпе, уйрăмах топливо ресурсĕсемпе усă курас ыйтусем çинче чарăнса тăнă. Хальхи вăхăтра халăха вутă парса тăрас тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă, çавăнпа та топливо вырăнне ытти япаласемпе, сăмахран, торфпа усă курма тытăнмалла. Шупашкар хулинчи коммунальнăй тата ведомственнăй çуртсене торфпа ăшăтса тăма кăмакасене тахçанах майлаштармалла пулнă, çапла вара вутăпа кăмрăка ытти районсене, сăмахран, топливо тĕлĕшĕнчен япăх пуракан Чурачăк, Октябрьски, Елчĕк, Канаш районĕсене яма май пулнă. Шупашкар хулинчи организацисем кăçал та торфпа начар усă кураççĕ. Хальхи вăхăтра Атăл леш енчи торф предприятийĕнче хатĕрленĕ торфăн пысăк запасĕсем пур.

— КПСС ХХ-мĕш съезчĕ ултăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсем,—тенĕ Митрофанова депутат, — пĕтĕм совет халăхĕн шухăш-кăмăлне палăртаççĕ. Пурне те вунă çул вĕрентес ĕçе куçма республикăра çĕнĕ шкул çурчĕсем ытларах кирлĕ. Анчах ку тĕлĕшпе пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур. Етĕрне хулинче вăтам шкулăн çуртне тăвасси пирки темиçе çул хушши ĕнтĕ калаçусем пыраççĕ. Анчах Госпланпа Çутĕç министерстви çак ыйтăва халĕ те татса паман. Политехникăлла вĕренĕве организацилес тĕлĕшпе те пысăк çитменлĕхсем пур. Шкулсенче оборудовани çителĕксĕр, материалсем тата политехникăлла вĕрентў валли кирлĕ ытти хатĕрсем çук.

Элĕк райисполкомĕн председателĕ Ярдухин юлташ районти колхозсенче техникăлла культурăсем туса илес ыйту çинче чарăнса тăнă. Районти колхозсенче туса илекен техникăлла культурăсенчен пĕри кантăр шутланать. Çавна май районта икĕ çўс-кантăр завочĕ туса лартнă. Колхозниксем, кантăр туса илес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. 1952 çулхипе танлаштарсан, кантăр акса тăвакан лаптăка икĕ хут ўстернĕ.

Анчах Ялхуçалăх министерствипе çўс-кантăр тресчĕ техникăлла культурăсем туса илессине тивĕçлипе хакламаççĕ. Уйрăмах çўс-кантăр пухса кĕртессине механизацилесси юлса пырать. Пирĕн республика условийĕсенче кантăр туса илмелли агротехникăна халиччен те туса хатĕрлемен, çак культурăна ўстерес енĕпе малта пыракансен опытне пропагандăлассине тата ăна ĕçе кĕртессине начар йĕркеленĕ.

Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕ Иванов юлташ çапла каларĕ: КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти тата январьти Пленумĕсен решенийĕсене пурнăçласа, республикăри колхозсемпе МТС-сем 1955 çулта хăшпĕр ўсĕмсем тунă. Иртнĕ çулта республикăри колхозсем 1954 çулхинчен ытларах тĕштырă туса илнĕ, государствăна тырă, сĕт, йĕтĕн тата кантăр вăрри, утă памалли плана иртерсе тултарнă. Чылай колхозсем 1956 çулхи çуркунне акса хăварма вăрлăх çителĕклĕ хатĕрленĕ, колхозниксене тырă чылай валеçсе панă. Ялхуçалăх ĕçĕсене тракторпа тăвасси ўснĕ.

Апла пулин те республикăри Ялхуçалăх министерствин, МТС-семпе колхозсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. КПСС ХХ-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектĕнче ялхуçалăх енĕпе кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлас тесен, машинатрактор станцийĕсен рольне ўстермелле.

МТС-сем техникăпа çителĕксĕр усă кураççĕ, тракторсем ĕççĕр нумай лараççĕ.

Хальхи вăхăтра машинăсене çуракине тата ялхуçалăх ĕçĕсем тума начар хатĕрлеççĕ. Уйрăмах Калинино, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Сиява, Сурмайдан, Çĕрпў тата Шупашкар МТС-ĕсенче тракторсене юсассине çителĕксĕр йĕркеленĕ.

Торф хатĕрлесси, уй-хире тислĕк тата вырăнти удобренисем кăларасси начар пырать.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур. 1955 çулта республикăри колхозсем кашни ĕне пуçне 1954 çулхинчен 34 килограмм сахалтарах сĕт суса илнĕ.

Осипова депутат республикăри шкулсен ыйтăвĕсене çителĕксĕр тивĕçтернĕшĕн Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Госплана тата Çутĕç министерствине критиклет. Ишлей райсовет исполкомĕ районта çĕнĕ шкулсем тума тата киввисене юсама кирли çинчен темиçе хутчен те ыйту лартнă, анчах ку тĕлĕшпе халĕ те нимĕн те туман.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн февралĕн 10-мĕшĕнчи ларăвĕнче Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджечĕ тата Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх пренисем малалла пынă.

Елчĕк райсовет исполкомĕн председателĕ Степанов юлташ районти ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕн ХХ-мĕш съездне пысăк çитĕнўсемпе паллă тума хатĕрленни çинчен каларĕ. Халĕ районти колхозсем çуракине тăрăшса хатĕрленеççĕ.

Степанов юлташ çакăнпа пĕрлех районти 24 колхозра зоотехник, 9 колхозра агроном çитменнине палăртать, Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине крахмал трестне предприятисене начар ертсе пынăшăн критиклет. Елчĕкри крахмал заводĕнче тивĕçлĕ йĕрке çук, унăн çуртне тĕпрен юсамалла.

Шупашкар райсовет исполкомĕн председателĕ Семенов юлташ çакна палăртрĕ: Вырăнти промышленность министерствипе Чăвашпромсовет районти промышленноçа аталантарма тăрăшмаççĕ. Чылай предприятисем ĕçе юрăхлă мар çуртсенче вырнаçнă, производство технологийĕ кивелнĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн работникĕсем районта сайра хутра пулаççĕ, ĕçе сводка тăрăх кăна пĕлеççĕ.

Малалла Семенов юлташ суту-илў, ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинче чарăнса тăчĕ.

— Муркаш районĕнче,—тет Моисеев депутат,—тĕштырă тухăçлăхĕ тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ, выльăхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрлемен, фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилессине кирлĕ пек йĕркелемен. Хăшпĕр министерствăсемпе ведомствăсен работникĕсем пуçарусăр ĕçлеççĕ, колхозсен ыйтăвĕсене вăраххăн татса параççĕ. Çакăн пек задача тăрать: пĕр-икĕ çул хушшинче района пĕтĕмпех электрификацилемелле, анчах çак задачăна ерипен пурнăçа кĕртеççĕ.

Ялти суту-илĕве лайăхлатмалла, минераллă удобренисем кўрсе килессине вăйлатмалла. Моисеев депутат районта участокри больница çуртне тума укçа-тенкĕ уйăрса пама ыйтать.

Пренире Елизарова депутат, Социальнăй обеспечени министрĕ Воронцова юлташ, Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министрĕ Калинкина юлташ тата Ляпин депутат тухса каларĕç.

Верховнăй Совет, пĕр саслă пулса, Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджетне тата Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклада çирĕплетет. Ун хыççăн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетнĕ. Çакăн хыççăн сесси хупăннă.

Информациллĕ пĕлтерў

Февралĕн 10-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре; Шупашкарта Советсен çуртĕн ларусен залĕнче Чăваш АССР-ĕн тăваттăмĕш созыври Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ уçăлнă.

Ларăва председатель пулса Чăваш АССР Верховнăй Совет Председателĕ **В. Я. Яковлев** депутат ертсе пынă.

Ларура Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджечĕ çинчен тата Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен Чăваш АССР Финанс министрĕ А. В. Сомов депутат тунă доклада малалла сўтсе явнă. Доклад тăрăх çаксем тухса каланă: ĕçсынни депутачĕсен Елчĕк райсовет исполкомĕн председателĕ **А. С. Степанов** юлташ, **С. Е. Елизарова** депутат (Вăрмар суйлав округĕ, Вăрмар районĕ), Чăваш АССР Социальнăй обеспечени министрĕ **А. И. Воронцова** юлташ, ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар райсовет исполкомĕн председателĕ **А. Н. Семенов** юлташ, **А. М. Моисеев** депутат (Муркаш суйлав округĕ, Муркаш районĕ), Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕн министрĕ **П. И. Калинкина** юлташ, **В. М. Ляпин** депутат (Чурачăк суйлав округĕ, Чурачăк районĕ).

Пренисем вĕçленнĕ хыççăн Верховнăй Совет Чăваш АССР Финанс министрĕн **А. В. Сомов** депутатăн юлашки сăмахне итленĕ.

М. П. Павлов депутат сĕннипе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ бюджета çирĕплетме çакăн пек йĕрке йышăннă: Чăваш АССР-ĕн бюджетне тата Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи республика бюджетне тупăшсемпе расходсен пĕтĕмĕшле итогĕсем тăрăх сасăласа йышăнмалла, Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă отчета тупăшсемпе расходсен пĕтĕмĕшле итогĕсем тăрăх сасăласа йышăнмалла. Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджечĕ çинчен калакан закона статьясем тăрăх сасăласа йышăнмалла.

Верховнăй Совет Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджетне тата Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă отчета, пĕр саслă пулса, çирĕплетнĕ. Малтан статьясем тăрăх сасăласа, унтан пĕтĕмĕшпе сасăласа, пурте пĕр саслă пулса, «Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1956 çулхи бюджечĕ çинчен калакан Закона» йышăннă.

Ун хыççăн Верховнăй Совет Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн иккĕмĕшпе виççĕмĕш сессийĕсем хушшинче кăларнă Указсене çирĕплетесси çинчен сўтсе явма тытăннă. Ку ыйтупа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ **А. И. Измайлов** депутат доклад туса панă.

Верховнăй Совет, пĕр саслă пулса, Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 44-мĕш статьине улшăну кĕртесси çинчен Закон йышăннă.

Верховнăй Совет Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ кăларнă çак Указсене çирĕплетесси çинчен постановленисем йышăннă: Г. А. Мартынов юлташа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕррремĕш заместителĕ пулма уйăрса лартасси, çавна май ăна Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕн ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен; М. И. Иванов юлташа Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕ пулма уйăрса лартасси çинчен; Н. А. Кожевников юлташа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Строительствăпа архитектура ĕçĕсен управленийĕн начальникĕ пулма уйăрса лартасси çинчен.

Çакăнпа Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин тăваттăмĕш созыври Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулнă залра.

И. Никифоров фотоўкерчĕкĕ.

Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджечĕ çинчен йышăннă ЗАКОН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1-мĕш статья. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1956 çулхи бюджетне, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ тăратнăскерне, Бюджет комиссийĕн доклачĕ тăрăх йышăннă улăштарусене кĕртсе, çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес: тупăшсем—385.333 пин тенкĕ, расходсем—384.683 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 650 пин тенкĕ ытларах пулмалла тата, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1957 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 15.700 пин тенкĕ пулмалла.

2-мĕш статья. Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджетĕнче халăх хуçалăхне укçа-тенкĕ памалли расходсем 42.733,4 пин тенкĕ, кунсăр пуçне, предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен хăйсен укçи-тенкинчен тухакан расходсем 24.526 пин тенкĕ пулмалла тăвас.

3-мĕш статья. Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджетĕнче социальнă-культурăллă ĕçсем валли памалли укçа-тенкĕ пĕтĕмпе 311.696,6 пин тенкĕ пулмалла тăвас.

Социальнă-культурăллă уйрăм ĕçсем валли тухакан расходсем çакăн чухлĕ пулмалла тăвас:

а) халăха вĕрентес ĕç тата культура енĕпе—пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем, техникумсем тата ытти специальнăй вĕренӳ заведенийĕсем валли, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем валли, рабочисен, колхозниксен тата инженерсемпе техниксен квалификацине ӳстермелли курссем тата ытти çавăн пек ĕçсем валли, библиотекăсем, культура çуртĕсем, театрсем, пичет валли тата халăха вĕрентес ĕçпе культура енĕпе тумалли ытти ĕçсем валли—пĕтĕмпе 198.633,6 пин тенкĕ, ку вăл иртнĕ çулхинчен 9.024,6 пин тенкĕ чухлĕ нумайрах;

б) сывлăха сыхлас ĕç енĕпе—больницăсем, диспансерсем, ача çуратмалли çуртсем, ача яслисем, санаторисем тата халăха медицина пулăшăвĕ парас тĕлĕшпе ытти ача-пăча учрежденийĕсем валли—106.923 пин тенкĕ, ку вăл 1955 çулхи планран 16.052 пин тенкĕ чухлĕ ӳсните пĕлтерет;

в) спортпа физкультура ĕçĕсем валли—1.233 пин тенкĕ;

г) социальнăй обеспечени енĕпе—империализмла вăрçăпа граждан вăрçи инвалидĕсене пенсисемпе пособи пама, инвалидсен çурчĕсене тытса тăма—4.907 пин тенкĕ.

4-мĕш статья. Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи республика бюджетне çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес: тупăшсем—102.571,1 пин тенкĕ, расходсем—101.921,1 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 650 пин тенкĕ ытларах пулмалла тата, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1957 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1.849 пин тенкĕ пулмалла.

5-мĕш статья. Чăваш АССР-ĕнчи районсемпе хуласен 1956 çулхи бюджечĕсене çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес:

(пиншер тенкĕпе)

Районсемпе хуласен ячĕсем	Тупăшсем тата расходсем	Кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1957 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне	Районсемпе хуласен ячĕсем	Тупăшсем тата расходсем	Кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1957 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне
Улатăр	8.093,8	426	Советски	5.823,3	323
Элĕк	6.588,5	374	Сĕнтĕр	6.038,8	342
Вăрнар	10.300,3	467	Вăрмар	9.647,5	512
Йĕпреç	9.563,3	397	Çĕрпӳ	9.928,1	396
Ишлей	5.969,8	344	Шупашкар	6.793,1	392
Калинино	6.280,2	369	Чкаловски	7.950,6	451
Канаш	7.687,3	466	Чурачăк	6.054,1	358
Куславкка	9.626,4	406	Шăмăршă	6.319,0	359
Комсомольски	7.424,7	441	Шăхасан	7.114,7	415
Красноармейски	6.894,9	394	Çĕмĕрле	14.203,8	528
Хĕрлĕ Чутай	7.911,4	460	Етĕрне	8.363,3	341
Кувакино	4.555,2	243	Елчĕк	8.269,1	479
Сĕнтĕрвăрри	9.071,5	361	Тăвай	6.813,6	404
Муркаш	5.430,3	318	Улатăр хули	18.181,7	545
Октябрьски	6.548,2	376	Шупашкар хули	35.308,0	1.059
Первомайски	6.899,7	403	Канаш хули	8.848,0	265
Пăрачкав	7.715,2	437			

6-мĕш статья. 1956 çулта халăхран тупăш тăрăх илекен налогран, ялхуçалăх налогĕнчен, ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран, государство заемĕсене подпискăпа сарнипе пухăннă укçаран, вăрман тупăшĕнчен, оборотран илекен налог укçинчен Чăваш АССР-ĕнчи районсемпе хуласен бюджечĕсене çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас (процентпа):

Районсемпе хуласен ячĕсем	Халăхран тупăш тăрăх илекен налогран	Ялхуçалăх налогĕнчен	ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран	Государство заемĕсене подпискăпа сарнипе пухăннă укçаран	Вăрман тупăшĕнчен	Оборотран илекен налогран
Улатăр	30	20	70	60	8	1,8
Элĕк	100	100	100	80	—	100
Вăрнар	40	100	70	80	40	11,9
Йĕпреç	43	100	70	80	40	14,1
Ишлей	100	100	100	80	—	32,8
Калинино	100	100	100	80	—	87,2
Канаш	60	100	70	80	40	0,9
Куславкка	40	100	70	80	—	36,5
Комсомольски	100	100	100	80	—	100
Красноармейски	80	100	100	80	—	76,4
Хĕрлĕ Чутай	100	100	100	80	40	86,2
Кувакино	100	100	100	80	—	70,4
Сĕнтĕрвăрри	30	100	70	80	40	29,2
Муркаш	100	100	100	80	—	91,4
Октябрьски	100	100	100	80	—	100
Первомайски	100	100	100	80	—	100
Пăрачкав	40	100	70	80	40	20,3
Советски	100	100	100	80	—	100
Сĕнтĕр	100	100	100	80	—	34,5
Вăрмар	60	100	73	80	—	59
Çĕрпӳ	40	99	80	80	—	47,6
Шупашкар	100	40	100	80	40	58
Чкаловски	100	100	100	80	—	100
Чурачăк	100	100	100	80	—	100
Шăмăршă	100	100	100	80	40	77,8
Шăхасан	100	100	100	80	—	100
Çĕмĕрле	40	19	70	80	12	3,0
Етĕрне	40	100	69	80	40	18,3
Елчĕк	100	100	100	86	—	100
Тăвай	100	100	100	80	—	100
Улатăр хули	30	100	70	46	—	17,6
Канаш хули	10	100	42	18	—	0,3
Шупашкар хули	40	100	21	10	—	3,3

7-мĕш статья. 1956 çулта районсен бюджечĕсене çакăн чухлĕ укçа уйăрса памалла тăвас:

а) колхозсенчен тупăш тăрăх илекен налогран—35 процент;

б) машина-трактор станцийĕсен тупăшĕнчен—40 процент;

в) единоличник хресчен хуçалăхĕсен лашисемшĕн илекен государство налогĕнчен—50 процент.

8-мĕш статья. Чăваш АССР-ĕн республика бюджетне çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас: Шупашкар хулинче—халăхран тупăш тăрăх илекен налогран—46,1 процент, ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран—40,3 процент, государство заемĕсене подпискăпа сарнипе пухăннă укçаран—90 процент, оборотран илекен налогран—12,7 процент; Канаш хулинче—государство заемĕсене подпискăпа сарнипе пухăннă укçаран—36,9 процент; ялхуçалăх налогĕнчен Улатăр районĕ тăрăх—80 процент, Çĕрпӳ районĕ тăрăх—1 процент, Шупашкар районĕ тăрăх—60 процент тата Çĕмĕрле районĕ тăрăх—81 процент; Шупашкар районĕнче пухăнакан вăрман тупăшĕнчен—60 процент тата Çĕмĕрле районĕнче пухăнакан вăрман тупăшĕнчен—80,8 процент. Кунсăр пуçне, республика бюджетне мĕнпур районсенче единоличник хресчен хуçалăхĕсен лашисемшĕн илекен государство налогĕнчен 50 процент памалла тăвас.

9-мĕш статья. Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчета: тупăшсем енĕпе—353.298 пин тенкĕ, расходсем енĕпе—352.514 пин тенкĕ, кунсăр пуçне бюджетри укçа-тенкĕн тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1956 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 15.431 пин тенкĕ пулнине çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 44-мĕш статьине улшăну кĕртесси çинчен йышăннă ЗАКОН

РСФСР Конституцийĕн 69-мĕш статьи тăрăх Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Конституцийĕн 44-мĕш статьине улшăну кĕртес, вăл статьяна çапла çырса хурас:

44-мĕш статья. Чăваш АССР Министрĕсен Советне Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ тăвать. Министрсен Советне çаксем кĕреççĕ:

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ;

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕсем;

Чăваш АССР Министрĕсем:

Шалти ĕçсен;
Сывлăха сыхлас ĕçĕн;
Коммунальнăй хуçалăхăн;
Культурăн;
Вырăнти промышленноçăн;
Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕн;
Çутĕçĕн;
Ялхуçалăхĕн;
Социальнăй обеспеченин;
Суту-илĕвĕн;
Финанссен;
Юстицин;

Чăваш АССР Государство плап комиссийĕн Председателĕ;

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Государство хăрушсăрлăх комитечĕн Председателĕ;

Управленисен начальникĕсем:

Автомобиль транспорчĕпе шоссе çулĕсен;
Строительствăпа архитектура ĕçĕсен;
Строительство материалĕсен промышленноçĕн;
Топливо промышленноçĕн.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

О. П. РУСИНА ДЕПУТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔН ЗАМЕСТИТЕЛĔ ПУЛМА СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Ольга Петровна Русина депутата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ пулма суйлас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 9-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ Г. А. МАРТЫНОВ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔН ПĔРРЕМĔШ ЗАМЕСТИТЕЛĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН КАЛАРНĂ УКАЗА ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Григорий Алексеевич Мартынов юлташа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма уйăрса лартасси çинчен, çапла май ăна Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕн ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен каларнă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

Т. А. АХАЗОВ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ЧЛЕНĔН ĔÇĔСЕНЧЕН ХĂТАРАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Тимофей Аркадьевич Ахазов юлташа, вăл республикăран тухса кайнă май, хăй панă заявленипе килĕшсе, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕн ĕçĕсенчен хăтарас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 9-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

С. М. ИСЛЮКОВ ДЕПУТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ЧЛЕНĔ ПУЛМА СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Семен Матвеевич Ислюков депутата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ пулма суйлас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 9-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ М. И. ИВАНОВ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР ЯЛХУÇАЛĂХ МИНИСТРĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН КАЛАРНĂ УКАЗА ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Моисей Иванович Иванов юлташа Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕ пулма уйăрса лартасси çинчен каларнă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ Н. А. КОЖЕВНИКОВ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН СТРОИТЕЛЬСТВĂПА АРХИТЕКТУРА ĔÇĔСЕН УПРАВЛЕНИЙĔН НАЧАЛЬНИКĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН КАЛАРНĂ УКАЗА ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Николай Алексеевич Кожевников юлташа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Строительствăпа архитектура ĕçĕсен управленийĕн начальникĕ пулма уйăрса лартасси çинчен каларнă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1956 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ

Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджечĕ тата Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Бюджет комиссийĕн председателĕ М. П. ПАВЛОВ депутат тунă содокладран

Бюджет комиссийĕ республика бюджечĕн тупăшĕсемпе расхочĕсене пăхса тухрĕ. Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджетне халăх хуçалăх планĕпе çыхăнтарса тунă. Бюджет комиссийĕ бюджета Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă пек, хăшпĕр улшăнусем кĕртсе, çирĕплетме сĕнет.

Расчетсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, бюджетăн тупăшĕсене 650 пин тенкĕлĕх ӳстерме май пурри палăрчĕ. Вăл шутран государство суту-илĕвĕ енĕпе—суту-илӳ ĕçĕнчи расходсене 200 пин тенкĕ чакарма пулать; кооперации енĕпе—суту-илӳ ĕçĕнчи расходсене 200 пин тенкĕ чакарма, çапла вара тупăшран илекен налога 200 пин тенкĕ ӳстерме пулать. Топливо промышленноçĕнче оборотра, аммортизаци фондĕнче ытлашши укçа-тенкĕ пур. 1955 çулта çак промышленность планран ытлашши тунă таса тупăшран бюджета укçа хывса çитереймен. Çапла вара вăл кăçал бюджета 200 пин тенкĕ укçа нумайрах хывма пултарать. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Строительствăпа архитектура ĕçĕсен управленийĕн тупăшсем расходсенчен ытларах, кунсăр пуçне вырăнсенче тĕрлĕреп тупăшсем ытларах илме пулать. Çапла тупипе 50 пин тенкĕ пухăнать.

Улшăнусене шута илсе, Бюджет комиссийĕ Чăваш АССР-ĕн 1956 çулхи бюджетне тупăшсем енĕпе 385.333 пин тенкĕ, расходсем енĕпе 384.683 пин тенкĕ çирĕплетме сĕнет, çапла вара тупăшсем расходсенчен 650 пин тенкĕ ытларах пулаççĕ.

Бюджет комиссийĕ хăшпĕр министерствăсем, ведомствăсем, райисполкомсем 1956 çулхи расходсене ӳстерме ыйтнă çырусене пăхса тухрĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ бюджетра хуçалăхпа культура строительстви валли укçа-тенкĕ кирлĕ таран уйăрса пама палăртнă, çавăнпа Бюджет комиссийĕ 1956 çулхи бюджетăн расхочĕсене ӳстерме килĕшмерĕ. Çавăн пекех хăшпĕр исполкомсем бюджетăн тупăшĕсене чакарма ыйтнипе те килĕнме май çук.

Бюджет комиссийĕ республикăн 1955 çулхи бюджетне пурнăçланин отчетне пăхса тухрĕ, ăна Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ сĕннĕ пек çирĕплетме кирлĕ тесе шутлать. Кунпа пĕрлех комиссия çакна палăртать: Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетне тупăшсем енĕпе ирттерсе тултарнă пулин те, хăшпĕр çăлкуçсемпе туллин усă курман, çавăн пирки 7.260 пин тенкĕ тупăшсем илсе çитереймен. Çакна хăшпĕр министерствăсемпе ведомствăсем хăйсен бюджет умĕнчи тивĕçĕсене пурнăçламанни çирĕплетсе парать. Сăмахран, «Чăвашстрой» трест таса тупăшран 707 пин тенкĕ, Коммунальнăй хуçалăх министерстви—1.622 пин тенкĕ, Культура министерствин хуçалăх органĕсем—215 пин тенкĕ укçа бюджета хывса çитереймен.

Бюджет комиссийĕ министерствăсемпе ведомствăсем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн иртнĕ сессийĕсенче панă сĕнӳсемпе кăтартусене мĕнле пурнăçласа пынине палласшăн. Хăшпĕр министерствăсем депутатсем кăтартнă çитменлĕхсене пĕтернĕ. Кунпа пĕрлех Бюджет комиссийĕ «Чăвашвăрман» тресчĕ (управляющийĕ Игнатьев юлташ) хăйĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене пĕтерменнине, вăрман хатĕрлемелли государство планне тултарманнине палăртать.

Вăрманпромхозсем çителĕксĕр ĕçленин тĕп сăлтавĕсем, халиччен хисеп пекех, рабочисене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарманни, ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулни, механизмсемпе япăх усă курни пулать. Игнатьев юлташăн вăрманпромхозсен ĕçĕпе ытларах интересленмелле, йывăç хатĕрлемелли государство планне тултармалла.

Депутатсем кăтартса панисене пурнăçлас тĕлĕшпе Сывлăх министерстви (министрĕ Ефимова юлташ) çителĕксĕр ĕçлет. Хăшпĕр районсенче сывлăх учрежденийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Нумай врач пункчĕсемпе фельдшер пункчĕсенче кадрсем çитмеççĕ.

Чăваш АССР Çутĕç министерстви ялти çамрăксен шкулĕсем валли тата хут пĕлменнисене вĕрентме уйăрса панă укçа-тенкĕпе япăх усă курнă. Шкулсен çурчĕсене питĕ вăраххăн тăваççĕ, шкулсем лартма уйăрса панă 3.314 пин тенкĕрен 1.997 пин тенкипе çеç усă курнă. Ачасенчен чылайăшĕ шкула çӳремеççĕ.

Культура министерствин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Нумай районсенче халăха кино кăтартас ĕçе йĕркелемен, культурăпа çутĕç учрежденийĕсем хăйсен ĕçне колхозсен производство задачисемпе çыхăнтармаççĕ.

Сывлăх министрĕн Ефимова юлташăн, Çутĕç министрĕн Каховский юлташăн, Культура министрĕн Капитонов юлташăн асăннă çитменлĕхсене пĕтермелле. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕн Андреев юлташăн асăнпă министерствăсен ĕçĕпе тĕплĕнрех интересленмелле, министерство руководителĕсен ответлăхне ӳстермелле.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн иртнĕ сессийĕсенче Суту-илӳ министерствипе Чăвашпотребсоюз халăха мĕнле таварсем ытларах кирлипе япăх тĕпчесе вĕреннине тата çителĕксĕр шута илнине, вырăнта туса кăларакан таварсене тавар çаврăнăшне сахал хутшăнтарнине палăртнăччĕ. Анчах вĕсем çав çитменлĕхсене халĕ те пĕтермен.

1955 çулта республикăри вырăнти промышленность халăха кирлĕ таварсем планран ирттерсе 10 миллион тенкĕлĕх туса кăларнă. Çапла вара тавар çаврăнăшне вырăнта туса кăларнă япаласем планпа палăртнинчен ытларах явăçтарма, тавар çаврăнăш планне ирттерсе тултарма май пулнă. Анчах 1955 çулта пĕр торг та çав пахa майпа усă курман, тавар çаврăнăш планне тултарман. Таса тупăшсем тумалли плана 98,2 процент çеç тултарнă. Торгсенче усăсăр тăкаксемпе растратăсем нумай. 1955 çулта планра палăртман тăкаксем 1.495 пин тенкĕ, вăл шутра штрафсем 126,5 пин тенкĕ, таварсен хакĕсене йӳнетни 375,1 пин тенкĕ, растратăсем 837,4 пин тенкĕ пулнă т. ыт. те.

Суту-илӳ министрĕп Гавриков юлташăн государство суту-илĕвĕнче йĕркелĕх тумалла.

Чăвашпотребсоюзăн 32 суту-илӳ организацийĕ пур, вĕсенчен 24 организацийĕ тавар çаврăнăш планне тултарман. Чăвашпотребсоюз тавар çаврăнăш планне пĕтĕмпе 24.427 пин тенкĕлĕх тултарман, çав вăхăтрах 1956 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне унăн таварсем 174.660 пин тенкĕлĕх пулнă. Çакăнтан тавар çаврăнăш планне тултарма таварсем çителĕклĕ пулни курăнать, анчах суту-илӳ ĕçне çителĕксĕр организациленипе тавар çаврăнăш планне тултарман.

Чăвашпотребсоюз колхозсенчен ялхуçалăх продукчĕсем комиссие илсе сутассипе япăх сарса пырать. Çак суту-илӳ тавар çаврăнăшне ӳстерме пулăшакан пысăк резерв пулса тăрать.

Таварсене ялсене илсе пыман пирки, магазинсемпеларексенче таварсен ассортименчĕн минимумне пурнăçланине çителĕксĕр тĕрĕсленине пула ялсенче тавар тата краççын час-часах тупса илме çук.

1955 çулта потребительсен кооперацийĕнче планра палăртман тăкаксем 853 пин тенкĕлĕх пулнă, суту-илӳ ĕçĕнчи расходсем планпа палăртнинчен 1.827 пин тенкĕ ытларах, пулнă. 1955 çулхи 11 уйăхра 985 пин тенкĕлĕх растратăсем тунă. 1955 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне растратăсем пурĕ 2.130 пин тенкĕ пулнă.

Чăваш АССР бюджетне ăнăçлăн тултарасси предприятисемпе хуçалăх организацийĕсем пурте продукци туса кăлармалли, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли тата таса тупăш тумалли заданисене ăнăçлă пурнăçланинчен килет. Анчах çакна палăртас пулать: нумай хуçалăх организацийĕсем продукци туса кăлармалли тата тупăш тумалли государство планне тултарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ, убыток тăваççĕ.

Тĕслĕхшĕн «Чăвашстрой» трестне илер. Çак трест 1955 çулхи строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне тултарнă, анчах вăл Сĕнтĕрвăрринчи шкула, республикăри больницăна, Улатăрти кинотеатра туса пĕтереймен. Пĕлтĕр трест строительствăпа монтаж ĕçĕсен хакне 4,8 процент ӳстернĕ, таса тупăш тăвас вырăнне 521 пин тенкĕ убыток тунă.

Кăçал треста план ӳстерсе çирĕплетсе панă. Трест управляющийĕн Куприянов юлташăн строительствăра йĕркелĕх тумалла, плана хисеп енчен те, пахалăх енчен те тултармалла.

КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕ промышленность ĕçĕнче пысăк çитменлĕх пуррине—предприятисем пĕр тикĕс ĕçлеменнине, продукци пĕр тикĕс туса кăларманнине палăртрĕ. Çакă вăл оборудовани хăвачĕпе тата ĕç вăйĕпе туллин усă курма чăрмантарать, брак туса кăларассине ӳстерет, продукцин хăйне ларакан хакне хăпартать. Çавăн пек çитменлĕхсем пирĕн республикăра та пур. Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленине пăхăнса тăракан 7 предприятирен пĕри çеç продукци туса кăлармалли плана тултарнă. Çак управлени халăх хуçалăхне 5.978 пин кирпĕч, 1.807 пин шлак блокĕ, 103 пин черепица, 3.175 тонна известь, 9.055 топна известь сăнăхĕ тата 20.204 кубометр чул парса çитереймен.

Плана тултарманнин тĕп сăлтавĕ вăл оборудовани ахаль нумай тăни пулать. Сăмахран, Ивановăри кирпĕч заводĕнче прессем 26,4 процент, Улатăрти кирпĕч заводĕнче—29 процент ĕçлемесĕр тăнă. Кирпĕч типĕтмелли сарайсемпе 96,3 процент çеç усă курнă.

Асăннă предприятисен руководителĕсем укçа-тенкĕпе материалсене перекетлеме тăрăшмаççĕ, служащисем штатпа пăхнинчен ытлашши тытаççĕ, топливо нормăран ирттерсе расходлаççĕ. Управлени работникĕсем предприятисен хуçалăх ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслеççĕ, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе килĕшсе тăраççĕ. Управлени пĕтĕмпе планпа палăртнинчен 1.110 пин тенкĕ укçа ытларах расходланă. Çак управленин начальникĕн Репкин юлташăн кашни предприяти ĕçĕпе тĕплĕнрех интересленмелле, строительство материалĕсем туса кăлармалли плана тултарма тăрăшмалла.

Вырăнти промышленность министерстви плана çирĕплетнĕ ассортимент тăрăх тултармасть.

Республика бюджетне ăнăçлă пурнăçлас тĕлĕшпе Финанс министерствипе унăн вырăнти органĕсем пысăк ĕç туса ирттерме тивĕçлĕ. Вĕсене çĕнĕ çăлкуçсемпе тата тупăшсемпе усă курас тĕлĕшпе пысăк правăсем панă. Анчах Финанс министерстви бюджета тупăшсем енĕпе мĕнле пурнăçланине тата предприятисен ĕçне çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмасть. Министерствăпа унăн вырăнти органĕсем бюджета пахалăх кăтартăвĕсем енĕпе тултарма, налог парăмĕсене тата хресченсенчен заем укçине вăхăтра пухма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветра

Промышленность, транспорт, çыхăну тата суту-илӳ предприятийĕсен 1955 çулхи тăваттăмĕш кварталти социализмла ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен

Чăваш республикинчи промышленность, транспорт, çыхăну тата суту-илӳ предприятийĕсем 1955 çулхи тăваттăмĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсовет çапла йышăннă:

СОЮЗРИ МИНИСТЕРСТВĂСЕМПЕ ВЕДОМСТВĂСЕНЕ ПĂХĂНСА ТĂРАКАН ПРЕДПРИЯТИСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти электроаппаратура тăвакан заводрах хăвармалла тунă (директорĕ Ардаматский юлташ, завком председателĕ Новиков юлташ). Çак завод продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмпе 127,4 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 124,2 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 25,8 процент йӳнетнĕ, планран ирттерсе 5.563 пин тенкĕ тупăш тунă.

Улатăрти пăравуссем юсакан завод лайăх ĕçленине палăртнă.

ÇĂМĂЛ ТАТА ПИР-АВĂР ПРОМЫШЛЕННОÇĔН ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти лента тĕртекен фабрикăна памалла тунă (директорĕ Байнов юлташ, фабком председателĕ Московская юлташ). Фабрика продукци туса кăлармалли плана 109,8 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 109,9 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 5,2 процент вырăнне 7,9 процент йӳнетнĕ.

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрики, Улатăрти атă-пушмак фабрики, Сĕнтĕрти пир-авăр фабрики тата Шупашкарти чăлха фабрики лайăх ĕçленине палăртнă.

ТРАНСПОРТ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕрпӳри 243-мĕш çулпа эксплуатаци участокĕнчех хăвармалла тунă (начальникĕ Мутнин юлташ, местком председателĕ Максимов юлташ). Çак участок тăваттăмĕш кварталти ĕçсен планне пĕтĕмпе 113,5 процент, строительство материалĕсен турттарса кăлармалли плана 112,4 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 115 процент тултарнă, ĕçсен хакне йӳнетмелли задание пурнăçланă.

Чугун çулăн 14-мĕш дистанцийĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

АПАТ-ÇИМĔÇ ТАВАРĔСЕН ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти кондитерски фабрикăна памалла тунă (директорĕ Смоленцев юлташ, фабком председателĕ Васильев юлташ). Фабрика продукци туса кăлармалли плана çирĕплетнĕ ассортимент тăрăх 107,9 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 113,3 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли задание пурнăçланă.

Шупашкарти макарон фабрики тата Çĕмĕрлери çăкăр завочĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

АПАТ-ÇИМĔÇ ТАВАРĔСЕН ПРОМЫШЛЕННОÇĔН РАЙОНСЕНЧИ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕмĕрлери апат-çимĕç комбинатне памалла тунă (директорĕ Тюрина юлташ, местком председателĕ Гаврилина юлташ). Комбинат продукци туса кăлармалли плана 130,6 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 153,7 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 1 процент вырăнне 3,6 процент йӳнетнĕ.

Канашпа Шупашкар хулисенчи апат-çимĕç комбиначĕсем тата Вăрмарти апат-çимĕç комбиначĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

КОММУНАЛЬНĂЙ ХУÇАЛĂХĂН ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Атăл леш енчи электростанцине памалла тунă (директорĕ Зубов юлташ, завком председателĕ Костров юлташ). Электростанци электроэнерги туса кăлармалли плана 108,3 процент тултарнă, электроэнергин хăйне ларакан хакне кашни киловатт-сехет пуçне 2,2 пус йӳнетнĕ, кашни киловатт-сехет электроэнерги пуçне топливо 10,5 процент сахалтарах расходланă, планран ирттерсе 70 пин тенкĕ тупăш тунă.

Шупашкарти водоканализаци кантурĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

ÇЫХĂНУ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕрпӳри çыхăну кантурĕнчех хăвармалла тунă (начальникĕ Иванов юлташ, рабочком председателĕ Егоров юлташ). Çыхăну кантурĕ тупăшсем илмелли плана 105,9 процент, хаçат-журнал сармалли плана 103,2 процент, хаçат-журнал сутмалли плана 119,6 процент, радиоточкăсем кĕртмелли плана 11,6 процент тултарнă.

Первомайски, Комсомольски тата Чкаловски çыхăну кантурĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

ВĂРМАН ХУÇАЛĂХĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Етĕрнери вăрман хуçалăхĕнчех хăвармалла тунă (директорĕ Абанумов юлташ, рабочком председателĕ Коновалов юлташ). Вăрман хуçалăхĕ йывăççене пăхса ӳстермелли плана 513 процент, сайралатмалли тата санитари ĕçĕсен планне 126 процент, халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 170 процент тултарнă.

Пăрачкаври тата Канашри вăрман хуçалăхĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

СТРОИТЕЛЬСТВО ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне «Казтрансстрой» трестĕн Канашри строительствăпа монтаж кантурне памалла тунă (начальникĕ Болдыш юлташ, местком председателĕ Сапотько юлташ). Çак кантур строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне 116 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 110 процент, суртсем тумалли плана 133 процент тултарнă, 24,5 пин тенкĕ таса тупăш тунă.

ПОЛИГРАФИ ПРОМЫШЛЕННОÇĔ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕрпӳри типографие памалла тунă (директорĕ Николаев юлташ, рабочком председателĕ Митрофанова юлташ). Типографи продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмпе 157,3 процент, таварлă продукци туса кăлармалли плана 188,8 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 137,6 процент тултарнă.

Ишлейри, Красноармейскинчи, Первомайскинчи, Канашри тата Çĕмĕрлери типографисем лайăх ĕçленине палăртнă.

Улатăрти атă-пушмак фабрикинче КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. Чылай рабочисем ĕç нормине куллен ирттерсе тултараççĕ, материалсем перекетлеççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: А. Ожигов прессовщик, Вăл 1955 çулта тата кăçалхи январь уйăхĕнче 11 пин тенкĕлĕх материалсем перекетленĕ.

Ф. Иванов фотоӳкерчĕкĕ.

Ĕçри çĕклөнӳ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. (Телефонпа). Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем КПСС XX-мĕш съездне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. Суракинче акма вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрлесе хунă, вĕсене лайăх тасатнă, кондицие çитернĕ. Хиро январь уйăхĕнче кăна 2.570 тонна торф, 1.200 тоннăна яхăн тислĕк кăларнă. Колхоз кăçал акăнакан çĕрсен кашни гектарĕ пуçне вăтам шутпа 7—8 тоннăран кая мар тислĕк кăларать.

Выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем те КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе йышăннă хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлаççĕ. Кашни 100 гектар çĕр пуçне халĕ 7-шер центнер аш-какай илнĕ, доярккăсем ĕнесенчен сĕт суса илессине кунран-кунах ӳстерсе пыраççĕ.

— Колхозниксен малашнехи ĕмĕчĕсем тата пысăкрах, — каласа парать колхоз председателĕ И. Яковлев юлташ. — Воронеж облаçĕнчи колхозниксемпе механизаторсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем чĕнсе каланине сӳтсе явнă хыççăн, вĕсем çĕнĕ пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен чылай малтан пурнăçлама йышăнчĕç.

Ĕнесенчен сĕт суса илессине 1958 çулта иртнĕ çулхинчен виçĕ хут ӳстеретпĕр. Сысна ашне кăçалах 1955 çулхинчен виçĕ хут нумайрах е, урăхла каласан, сухалакан çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 35 центнер туса илетпĕр. Фермăра ĕçлекенсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлама пĕтĕм вăя хураççĕ. Свинаркăсем халĕ 115 сысна самăртаççĕ, вăл шутран 70 пуç февраль уйăхĕнче государствăна памалла. Çулталăк хушшинче пурĕ 400 сысна самăртма палăртнă. Выльăх-чĕрлĕхрен продукци туса илессине хăвăрт ӳстерес тесе, кăçал колхоз 115 гектар çине кукуруза акма, çапла вара общественлла хуçалăхри кашни ĕне валли кукуруза симĕс массинчен 7—8 тоннăран кая мар, самăртма хупнă кашни сысна валли кукуруза пуçĕнчен 3-шер тонна силос хывма йышăннă.

Н. ОРЛОВ.

Ир пулакан çĕрулми ытларах лартма йышăнчĕç

Шупашкар районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ çĕрулмипе пахча çимĕç туса илессине тата хатĕрлессине ӳстересси çинчен йышăннă постановлени пысăк хавасăхпа сӳтсе яваççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем иртнĕ çулта çĕрулми 37 гектар кăна лартнă. Ситес икĕ çул хушшинче колхоз çĕрулми лартмалли лаптăка 60 гектара çити ӳстерме йышăнчĕ. Колхозниксем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 200—220 центнер çĕрулми пухса кĕртме пулчĕç. Колхоз, хула çывăхĕнче пулнă май, ир пулакан пахча çимĕçсем ытларах лартма тăрăшать.

Партипе правительство йышăннă постановлени çине ответлесе, районти ытти колхозсем те çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. 1956 çулта районĕпе 150 гектар çинче ир пулакан çĕрулми, 21 гектар çинче ир пулакан пахча çимĕçсем лартса тăваççĕ.

Ф. МАРКОВ.
А. ТИМОФЕЕВ.

Вăрнар МТС-ĕнче

Механизаторсен клубĕ. Машина-трактор станцийĕн 150 çын вырнаçмалăх клуб пур. Унта механизаторсем час-часах кино кураççĕ, лекцисем итлеççĕ. Çак кунсенче парти райкомĕн секретарĕ Г. Трофимов юлташ улттăмĕш пилĕкçуллăх тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проекчĕ çинчен доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн «Звезды на крыльях» ятлă кинокартина пулчĕ.

Ачасен сачĕ. Иртнĕ кĕркуннеренпе МТС-ри ача сачĕ ĕçлет. Кăна лайăх пӳрт уйăрса панă. Унта ачасене канма та, выляма та лайăх условисем туса панă.

Мичурин урамĕ. МТС территорийĕнче механизаторсен çĕнĕ поселокĕ ӳсет. Унăн малтанхи урамне аслă ученăй И. В. Мичурин ятне панă. С. Петров, И. Кашев, Воробьев тата ытти механизаторсем çĕнĕ поселокра, хăйсен пӳрчĕсенче пурăнаççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

КИНО

Аслă халăхсен туслăхĕ

Республикăри кинотеатрсенче «Дружба великих народов» ятлă документла фильм кăтартма тытăнчĕç. Çак кинокартина СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин юлташпа СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Членĕ Н. С. Хрущев юлташ Инди правительстви чĕннипе Индие кайса килни çинчен каласа парать.

Совет руководителĕсем Индире, Бирмăра, Афганистанра курса çӳренине совет çыннисем, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери тӳрĕ кăмăллă çынсем пĕр уйăх хушши питĕ тимлĕн, чунтан савăнса сăнаса тăчĕç. Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев юлташсене аслă Инди халăхĕ туслăн, çав тери ăшă кăмăлпа йышăнни çинчен эпир хаçатсенчен, радиопа паракан хыпарсенчен пĕлсе тăнă. Халĕ ĕнтĕ эпир çакна хамăр куçпа курма пултаратпăр.

...1955 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕ. Инди Республикин столици—Дели уяв чухнехи пек капăр. Халăх Совет Союзĕнчен пыракан хăнасене кĕтсе илме хатĕрленет. Аэродромран хулана каякан шоссе çине, хăнасем иртсе пымалли урамсемпе площадьсене ирпе ирех Делире тата çывăхри хуласенче пурăнакансем, хресченсем пухăнаççĕ... Фильмăн малтанхи кадрĕсене курсанах халăх хăнасене кĕтсе илме çав тери чаплăн, савăнăçлăн хатĕрленнине туйса илетĕн.

Акă Палам аэродромĕ. Унта Инди республикин вице-президенчĕ Сарвапалли Радхакришнан, премьер-министр Джавахарлал Неру, паллă государство деятелĕсем, обществăлла деятельсем пыраççĕ.

Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев самолет çинчен тухсан, вĕсене унта пухăннă халăх хĕрӳллĕн саламласа кĕтсе илет. Шкул ачисем — хĕрачасем вĕсене саламласа юрлаççĕ, хăнасем çине чечек кăшăлĕсем çакаççĕ.

Совет Союзĕнчен пынă хăнасем ларакан машинăсем хулана кайма тухаççĕ. Темиçе çĕр пин çын вĕсене саламлă сăмахсемпе саламлаççĕ. Эпир «Хинди, руси—бхай, бхай!» («Индиецсемпе вырăссем—тăвансем!») тесе кăшкăрнине уйăрса илетпĕр. Çул тăршшĕпех икĕ енĕпе те çынсем тăрса тухнă. Халăх çав тери нумай: урамсемпе площадьсенче кăна мар, балконсем çинче, суртсем çинче те туллиех. Вĕсем пурте саламлаççĕ. Мĕн чухлĕ чечек! Машинăсем иртсе пыракан урамсенче талкишпех чечек выртать. Аслă Инди халăхĕ совет халăхĕпе тăванла туслă пулнине темиçе çĕр пин çын çавăн пек чун-чĕререн кăтартса панине хумханмасăр пăхма çук.

Экран çинче çĕнĕ кадр—Делири митинг. Анлă площаде çĕршер пин çын пухăннă. Вĕсем пурте хăйсен йăлипе çĕр çине, ура хуçса, ларса тухнă. Вĕсем совет руководителĕсен кашни сăмахне тимлĕн итлеççĕ. Индипе Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çинчен, вĕсем пĕтĕм тĕнчери çирĕп миршĕн пĕрле кĕрешни çинчен каланине митингри халăх хĕрӳллĕн ырлать, мĕншĕн тесен ку вăл унăн чун-чĕрери шухăш-ĕмĕчĕ.

Эпир Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев юлташсене премьер-министр Джавахарлал Неру, республика президенчĕ Раджендра Прасад йышăннипе, совет руководителĕсем Инди парламентĕнче сăмах тухса каланине куратпăр.

Булганинпа Хрущев юлташсем Индире виçĕ эрне курса çӳренĕ. Кинофильма курнă чухне эпир хамăр та вĕсемпе пĕрле пулнă пек туйăнса каять. Эпир Индири пысăк хуласене—Мадрас, Калькутта, Джайпур хулисене, Кашмирăн тĕп хулине—Сринагара куратпăр. Пирĕн куç умĕнче предприятисемпе стройкăсем, ялсем, нихçан хĕл пулман вырăнти çутçанталăкăн илемлĕхĕ. Эпир Индин ĕçчен те талантлă халăхĕпе паллашатпăр. Пур çĕрте те халăх пирĕн çĕршывран пынă хăнасене пĕтĕм чĕререн ырă сунса кĕтсе илет.

Булганинпа Хрущев юлташсем Бомбейри ачасемпе тĕл пулни уйрăмах асра юлать. Ачасем хăнасене хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ: ташлаççĕ, выляççĕ. Пĕчĕк хĕрача хăйĕн чĕрери ăшă туйăмĕ çинчен—Бомбей ачисем совет ачисене хăйсен хĕрӳ хĕвелĕн пĕр татăкне парасшăн пулни çинчен каланине хумханмасăр итлеме çук. Калькуттăра хăнасене виçĕ миллион çын кĕтсе илни те чăннипех тĕлĕнтерет.

Инди халăхĕ совет руководителĕсене çавăн пек ăшшăн кĕтсе илни вăл вĕсем çĕршывсем хушшинче туслă хутшăнусем йĕркелессишĕн, халăхсем пĕр-пĕрипе тачă çыхăнса ĕçлемелле тăвассишĕн ырă кăмăлпа тăрăшни çинчен калать. Мире юратакан мĕнпур халăхсем çĕршывсем хушшинче çавăн пек хутшăнусем йĕркелесшĕн. Ахальтен мар ĕнтĕ ют çĕршывсенчи буржуалла хаçатсем Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев Индие, Бирмăна, Афганистана кайса çӳрени çинчен тарăхса çырчĕç.

Колониализм пусмăрĕнчен хăтăлнă Инди халăхĕ пысăк хавхаланупа хăйĕн промышленноçне аталантарас тĕлĕшпе ĕçлет. Бхакра-Нангал гидроэлектростанцине тăвакансем хăйсен ĕçĕ çинчен Совет Союзĕнчен пынă хăнасене çав тери савăнса каласа параççĕ. Совет руководителĕсем Мадрасра, Читтаранджанра тата ытти хуласенче те тĕрлĕ заводсенче пулнă. Вĕсем Инди халăхне хăйĕн хăватлă промышленноçне тăвас ĕçре çитĕнӳсем тума ырă сунаççĕ.

Пуна хули çывăхĕнче пĕр ялта Булганинпа Хрущев юлташсем хресченсемпе тĕл пулаççĕ. Пĕр çĕрте рис акаççĕ, юнашарах пулса çитнĕ тырпула пухса кĕртеççĕ. Çутçанталăк условийĕсем тырпул акса ӳстерме питĕ аван, анчах та çĕре темиçе ĕмĕр ĕлĕкхи пекех сухалаççĕ, вăкăрпа авăн çапаççĕ. Кунти ялхуçалăхĕ çакăн пек шайра тăни вăл—Англи колонизаторĕсем икçĕр çул хушши пуçпулса тăнин результачĕ. Кун пек ĕçленине эпир хамăр патăрта та курнă, тет Н. С. Хрущев, анчах Совет Союзĕнче халĕ ĕнтĕ ун пекки çук. Çак ĕçсене совет çыннисем халĕ машинăсемпе тăваççĕ, тесе каласа парать вăл.

Совет руководителĕсем опытлă ялхуçалăх станцийĕсенче пулса вĕсен ĕçĕсемпе паллашнă.

Çĕршыв тăрăх çӳренĕ вăхăтра Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев аслă Инди халăхĕн авалхи культура памятникĕсене курса çӳренĕ. Акă авалхи обсерватори Джантар Мантар, ултçĕр çул каярах тунă çитмĕл метр тăршшĕ Кутб Минар башни, пин те пилĕкçĕр çул ĕлĕкрех лартнă тимĕр юпа. XVII-мĕш ĕмĕрте туса лартнă Тадж-Махал мавзолейĕ халĕ те хăйĕн илемлĕхĕпе тĕлĕнтерет. Кăна тунă çĕрте çирĕм пин çын çирĕм çул хушши ĕçленĕ.

Сринагар хулинче Булганинпа Хрущев юлташсем Кашмирти чаплă алăстисем тунă япаласен выставкине курса çӳреççĕ.

Фильм вĕçĕнче президент дворецĕнчĕ СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Членĕ Н. С. Хрущев тата Инди премьер-министрĕ Джавахарлал Неру Пĕрле тунă заявлени çине алă пуснине кăтартнă. Çав историлле документра Индипе Совет Союзĕн руководителĕсем малашлăх ырă пулассине хăйсем ĕненсе тăни çинчен, мире çирĕплетес ĕçе пĕтĕм вăй-хала пама çирĕп шут тытни çинчен пĕлтерчĕç.

Совет руководителĕсене Делири аэродромра ăсатса янă чухне халăх нумай тухни, вĕсемпе ăшшăн сывпуллашни аслă халăхсен туслăхне тата тепĕр хут çирĕплетсе парать.

Документла фильмсен Центральнăй студийĕн коллективĕ Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев Индие кайса çӳрени çинчен, икĕ çĕршыва пĕр-пĕринпе çывăхлатнă тата тĕнчери мире çирĕплетме пулăшнă паллă событи çинчен питĕ лайăх фильм ӳкерсе кăларнă.

С. ДАНИЛОВ.

Малта пыракан колхозсен, МТС-сен тата совхозсен питĕ паха примерĕ

КПСС XX-мĕш съезчĕ СССР Союзĕн халăх хуçалăхне аталантармалли улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен партин Центральнăй Комитечĕ туса хатĕрленĕ проектне ялти ĕçченсем, мĕнпур совет çыннисем пекех, чĕререн хапăл туса кĕтсе илчĕç. Çак историлле документа тĕплĕн сӳтсе явса, колхозниксем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем улттăмĕш пилĕкçуллăхра тĕштырă, техникăлла культурăсем тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине ӳстерес тĕлĕшпе конкретлă мерăсем палăртаççĕ.

Çак ĕç вăхăтĕнче малта пыракан колхозсем, МТС-сем тата совхозсем чаплă пуçару тăваççĕ, ялхуçалăх производствин хăватлă резервсене тупса ĕçе кĕртеççĕ. Халăх пуçарăвĕ уççăн палăрнине продукци тума ĕç вăйĕ хурассинĕ чылай чакарса ялхуçалăх продукцийĕ туса илессине пур майсемпе те ӳстерессишĕн юлашки вăхăтра сарăлса пыракан юхăм лайăх кăтартса парать. Çак пуçарăвăн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк.

Партин XX-мĕш съезчĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен проектĕнче КПСС Центральнăй Комитечĕ кашни гектар çĕр пуçне сахал ĕç вăйĕ тата укçа-тенкĕ хунипех продукци туса илессине нумай ӳстерес задача лартрĕ. Продукцин кашни единицине тума ĕç вăйĕ сахалрах хурассишĕн, çапла вара ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешесси колхозсен, МТС-сен тата совхозсен экономика тĕлĕшĕнчи аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕ пулса тăрать.

Юлашки вăхăтра ку тĕлĕшпе ыттисен хушшине сарма тивĕçлĕ паха опыт чылай пухнă. Нумаях пулмасть «Правда» хаçатра Мускав облаçĕнчи Кунцево районĕнчи «Путь новой жизни» колхоз председателĕн Арепьев юлташăн статьи пичетленсе тухрĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çак колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ йĕрке тунă. Колхозниксем ĕнесене талăкра икĕ хут сума тытăннă. Çакă вăл доярккăсене çирĕплетсе панă ĕнесен шутне чылай ӳстерме май панă. Халĕ ĕнтĕ механизмсемпе усă курнă чухне кашни доярка 10—12 ĕне мар, 30—32 ĕне сăвать. Çакна пула фермăра ĕç тухăçлăхĕ икĕ хут ӳснĕ, пĕр центнер сĕтĕн хăйне ларакан хакĕ икĕ хут сурă йӳнелнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах кашни ĕнерен суса илекен сĕт хисепĕ чакман, чылай ӳснĕ. Çак Кунцево районĕнчех Сталин ячĕпе тăракан колхозра ĕнесене талăкра икĕ хут сума тытăнни, çавăн пекех управлени аппаратне пĕчĕклетни хĕрĕх ытла çынна хуçалăхăн ытти отраслĕсенчи ĕçе куçарма май панă.

Мускав облаçĕнче партин Ленински райкомĕ, колхозсенче ĕçсем мĕнле пынине тĕплĕн сăнаса пĕлсе, аш-какай, сĕт, çĕрулми, пахча çимĕç туса илме ĕç вăйĕ хурассине чакарас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртнă. 1956 çултах ĕнтĕ пĕр центнер сĕт суса илме каякан ĕç вăйне 6 ĕçкунĕнчен 4 ĕçкунĕ таран, пĕр центнер сысна ашĕ туса илме каякан ĕç вăйне 45 ĕçкунĕнчен 27 ĕçкунĕ таран чакараççĕ. Продукци туса илме ĕç вăйĕ сахалтарах хурас задача, пуринчен малтан, ялхуçалăх ĕçĕсене малалла механизацилеме, управлени аппаратне татăклăнах пĕчĕклетнипе пурнăçланса пырать.

Партин Мускав область комитечĕ партин Ленински тата Кунцевски райкомĕсен пуçарăвне ырланă, колхозсенчи, МТС-сенчи тата совхозсенчи ытлашши пысăк штатсене пĕчĕклетес, ялхуçалăх продукцийĕ туса илме хуракан ĕç вăйне чакарас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем пуçарма партин мĕнпур райкомĕсене сĕннĕ.

Украинăри Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче Хмельницкий облаçĕнчи Городокски райкомĕн секретарĕ Титарчук юлташ интереслĕ опыт çинчен каласа панă. Çак районта экономика ыйтăвĕсем тăрăх конференци ирттернĕ. Унăн участникĕсем — колхозсен председателĕсем, бригадирсем, фермăсен заведующийĕсем, МТС-сен работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем—ку е тепĕр колхозра ялхуçалăх продукцийĕн пĕр единицине тума мĕн чухлĕ ĕçкунĕ пĕтернине, пĕр пек условисенчех ĕçлекен колхозсем продукци туса илме хывакан ĕç вăйĕ мĕншĕн тĕрлĕрен пулнине тĕплĕн тишкерсе тухнă. Конференци колхозсене усă кӳрекен мероприятисем, çав шутра ĕçсене механизацилес, производствăна организацилес тĕлĕшпе паха мероприятисем чылай сĕннĕ. Йышăннă мерăсем пулăшнипе çак районта 1956 çулта 400 пин ĕçкунĕ таран перекетленет, администрацие управлени аппаратĕнчен кăна урăх ĕçсене 200 çын ытла куçать.

Савнашкал тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Вĕсем пирĕн çĕршывăн кашни облаçĕпе республикинчех пур. Малта пыракан нумай колхозсемпе совхозсенче продукци туса илессине ӳстерес, унăн хăйне ларакан хакне чылай йӳнетес тĕлĕшпе тĕплĕн тата çине тăрса ĕçлеççĕ.

Кунта парти организацийĕсем, совет тата ялхуçалăх органĕсем мĕнпур паха опыта пĕтĕçтерни, пĕр центнер тырă, аш-какай, сĕт тата ытти продуктсем туса илме ĕç вăйĕ сахалрах расходлас тĕлĕшпе конкретлă мерăсем палăртас ĕçре колхозниксене, колхозсен руководителĕсене пулăшмалла.

Çак питĕ пысăк та ответлă ĕçе пирĕн наука учрежденийĕсем, ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен экономистсем активлă хутшăнмалла. Союзлă республикăсенчи коммунистсен партийĕсен съезчĕсенче, крайсемпе облаçсенчи парторганизацисен конференцийĕсенче колхозпа совхоз производствин экономика ыйтăвĕсене тĕпчесе хатĕрлеме тивĕçлĕ наука учрежденийĕсен ĕçне хытă критиклерĕç. Колхозсен продукци единицине пуçне мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ хунине шутласа кăлармалли методика çук, тесе палăртрĕç. Экономика институчĕ, социализмла ялхуçалăх предприятийĕсене организацилес тĕлĕшпе ĕçлекен кафедрăсем колхозсемпе тата совхозсемпе начар çыхăнса тăраççĕ.

Халĕ пирĕн çĕршыври колхозсемпе совхозсенче производство планĕсем туса хатĕрлеççĕ, суракине хатĕрленеççĕ, тĕштырă тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртаççĕ. Нумай колхозсен опычĕ кăтартса панă тăрăх, тĕштырă тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине парти палăртса панă шая 1960 çулта мар, унтан чылай маларах çитерме пирĕн пур майсем те çителĕклĕ. Ăмăрту пуçаракансем—Воронеж облаçĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем — хăйсен ĕçне шăпах çавăн пек çул-йĕрпе йĕркелесе пыраççĕ те ĕнтĕ. Вĕсем аш-какай туса илессине пĕр çулталăк хушшинче икĕ хут ӳстерме, сĕт суса илессине вара çулталăк çурă хушшинче икĕ хут ӳстерме палăртрĕç.

Ытти облаçсенче çавăн пек майсем çук-и вара? Паллах ĕнтĕ, пур. Парти работникĕсем, экономистсем, ялхуçалăх специалисчĕсем резервсем шыраса тупас ĕçре кашни колхоза конкретлă пулăшу пама тивĕçлĕ. Тĕштырă, аш-какай тата сĕт туса илессине мĕнле çăлкуçсен шучĕпе ӳстерме пулать? Тырпул акса тăвакан çĕр лаптăкĕсен мĕнле структури пуринчен те лайăхрах пулать? Сыснасене йышлăн самăртас ĕçе мĕнле организацилемелле? Çак ыйтусемпе ытти ыйтусем колхозниксене питĕ хумхантараççĕ, вĕсем çине ответ парасах пулать. Чи кирли вăл — çынсемпе ĕçлениче, çынсене воспитани панинче, обезличкăпа ответсăрлăха пĕтернинче пулать. Кашни мероприятишĕн ĕçе ăнланакан, ĕçе организацилеме пĕлекен пĕр-пĕр çын ответлă пулмалла.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра ялхуçалăхĕнче пысăк та ответлă задачăсем — ялхуçалăх продукчĕсем туса илессине ӳстерес, тĕштырă, çĕр мамăк, йĕтĕн, сахăр кăшманĕ, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илме кайакан ĕç вăйне чакарас задачăсем тăраççĕ. Çавăнпа та малта пыракан колхозсен пуçарăвне вăйлатма пулăшни, вĕсем продукци туса илме расходлакан ĕç вăйне нумай чакарнипе пĕрлех продукци ытларах туса илессинĕн пуçласа янă кĕрешӳ опытне ыттисем хушшине сарса йыни çав тери кирлĕ ĕç пулса тăрать.

(«ПРАВДА» хаçатăн февралĕн 9-мĕшĕнчи умстатьинчен).

Редакцие килнĕ çыру

Пирĕн колхоз мĕншĕн юлса пырать

ÇĔМĔРЛЕ. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче те пирĕн Маленков ячĕпе тăракан колхоз пысăк çитĕнӳсемех тăваймарĕ. Тырпулсен тухăçĕ те, выльăх-чĕрлĕхрен продукци илесси те ӳсмест. Кӳршĕри ытти артельсен хуçалăхĕ юлашки икĕ-виçĕ çул хушшинче нумай тĕрекленчĕ.

Пирĕн колхоз мĕншĕн юлса пырать-ха? Чи малтанах артельте ĕç дисциплини япăхса кайни хытă чăрмантарать. Колхоз производствинче ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлекенсем, аякра урăх ĕç туса çӳрекенсем вуншарăн шутланаççĕ. Вăрман алă айĕнче пулнă май, çавнашкал çынсем йӳнĕ хакпа вутă илеççĕ те хирти ялсене хаклăрах хакпа сутаççĕ, кăмрăк тăваççĕ. Сурт-йĕр туса сутакансем те пур. Унта-кунта кайса сутă тăвас ĕçре вĕсем колхоз лашисемпе усă кураççĕ. Урапи-суни те, ут таврашĕсем те вĕсен килĕсенчех.

1955 çулта ĕçкунĕсем тумалли минимума тултарманнисен шучĕ 60—70 çынна çитет. Вĕсенчен хăшпĕрисем темиçе çул хушши ĕнтĕ харпăр хăй хуçалăхĕнче çеç ĕçлеççĕ, колхозник ячĕпе витĕнсе пурăнаççĕ.

Виçĕ çул хушшинче артель председателĕ пилĕк хут улшăннă. Ытти ответлă работниксем те тăтăшах улшăнса тăраççĕ. Сăмахран, 1955 çулта IV-мĕш уй-хир бригадинче пилĕк бригадир, III-мĕш бригадăра виçĕ бригадир улшăннă. Çавна пула ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илмен. Колхозниксен ĕç кĕнекисем çине пачах çырса пымаççĕ.

Ревизи комиссийĕ хăйĕн ĕçне ячĕшĕн çеç туса пырать. Вăл колхоз правлени ĕçне пĕр кварталта та тĕрĕслемен. Çакă вăл хăшпĕр ответлă работниксене артель пурлăхне саратма пулăшнă. Акă, В. Васильев счетовод-кассир, унăн ĕçне никам та тĕрĕслеменнине кура, çулталăк хушшинче артель укçине 10 пин тенкĕ хăй сумне чикнĕ.

Эпир çĕрпе тĕрĕс усă кураймастпăр-ха. Иртнĕ çулта 50 гектар çине хуратул, 15 гектар çине вир акнă. Çак культурăсен тухăçлăхĕ вара кашни гектартан 2-шер центнер çеç пулчĕ. 80 гектара яхăн çĕр пушах, нимĕн усă памасăр выртнă. Вăйлă тырпулшăн халĕ те тивĕçлипе кĕрешни курăнмасть.

Маленков ячĕпе тăракан колхозăн хуçалăха аталантармалли пысăк майсем пур. Артель правленийĕпе пуçламăш парторганизаци колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетес, хуçалăхăн мĕнпур отраслĕсене хăвăрт аталантарас тĕлĕшпе пуçарулă пулни кирлĕ. Пирĕн колхоза КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн, машинăпа трактор станцийĕн ытларах пулăшмалла.

Н. АНИСИМОВ.
Маленков ячĕпе тăракан колхоз членĕ.

Халӑх хавалӗ

ОЧЕРК

Хушаматне манса кайиччен хуша-хуша ӗҫнӗ хыҫҫӑн мухмӑрпа аптранӑ колхоз председателӗ килӗрен-киле чупса сӗт шыранӑ. Мухмӑрла сӗт ӗҫме юратнӑ-мӗн ҫав йӗс пыр. «Мӗншӗн килӗрен-киле ҫӳресе сӗт шыратӑн, колхозӑн сӗт ферми пурҫке!»—тенӗ ҫакна тахӑшӗ. «Ой, вернах та! Пирӗн колхозра ӗне ферми пурҫке!»—тенӗ вара ӑнӑҫсӑр пуҫлӑх, ӗне ферми ҫинчен аса илсе...

Пашалукассинче ку халапа илтмени сукрах пулӗ. Ку—пӗтӗмпех шухӑшласа кӑларнӑ халап мар, чӑн пулса иртнӗ япаланах аса илтерекен шӳт ҫӑмах. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи малтанхи йывӑр ҫулсенче «Красный Октябрь» колхозра ӗҫсем хальхи пек пулман. Председательсем, бригадирсем час-часах улшӑннӑ, вӗсем хӑйсен ӗҫне хӑнӑхса-вӗренсе те ҫитеймен е малалах асӑннӑ «председатель» йышшисем мухмӑр чӗртме те ӗлкӗреймен—ӗҫрен тухса ӳкнӗ. Паллах, фермӑра ӗҫлекенсем те улшӑнсах тӑнӑ, пӗр ӗҫре нумай хушӑ ӗҫлекенсен йышӗ чаксах пынӑ. Уйрӑмах ӗне ферминче ҫирӗп йӗрке пулман, выльӑх апатне тирпейсӗр тыткаланӑ, тӗлсӗр тӑкакланӑ, ҫавӑнпа ҫур еннелле ӗнесем начарланнӑ, ура ҫине тӑрайми пулнӑ. Хӑшпӗр чунсӑр этемсем, «ҫӑмӑл пурнӑҫ» шыраса, тӑван колхозри ситиенлӗхсене пӗтерессишӗн тӑрӑшман, хуланалла ҫул тытнӑ...

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗ хыҫҫӑн, пур колхозсенчи пекех, «Красный Октябрь» колхозри ӗҫсем те тӗпренех улшӑнчӗҫ. Артель ҫулсеренех тӗрекленсе, вӑйланса пырать, районти малта пыракан колхозсемпе ӑмӑртать. Партипе правительство йышӑннӑ историлле постановленисем халӑхӑн вӑй-хавалне ҫӗклерӗҫ, колхоз ӗҫченӗсене пысӑк ӗҫсем тума хавхалантарчӗҫ.

Сӑмахӑмӑр ӗне ферми ҫинчен пулать, иртни ҫинчен эпир фермӑна ҫул тытнӑ май аса илтӗмӗр.

Пашалукассинчен тухсан, вӑрман хӗрриччи илемлӗ вырӑнта, шифер витнӗ ҫӗнӗ суртсем уй урлах курӑнаҫҫӗ. Кунта—Муркаш районӗнчи «Красный Октябрь» колхозӑн ӗне ферми.

Кӗрек мӗнле кил-суртра е хуҫалӑхра ҫирӗп йӗрке пуррине килкартине кӗрсенех сисетӗн. Ферма картишӗн тӑватӑ юпаллӑ эрешлӗ хапхи ҫине «Ӗҫсӗр кӗрсе ҫӳреме юрамасть!» тесе ҫырнӑ. Пуринчен малтан сире ферма заведующийӗ Кузьма Андреевич Ошманов хирӗҫ тухать. Вӑл сире, тарават ҫын йӑлипе, ӗне витине илсе кайиччен малтан пӳрте кӗртсе кӑтартать.

Выльӑх пӑхакансем пысӑк пӳртре пурӑнаҫҫӗ. Аслӑ та ҫутӑ икӗ пӳлӗмре тимӗр кроватьсем йӗркерен лартса тухнӑ, тӳшексенӗ пурне те кӑвак утиялпа витнӗ; кашни кровать умӗнче тӗрӗллӗ шурӑ алшӑлли ҫакӑнса тӑрать; стенасем ҫинче плакатсем, ӗҫ графикӗсем, выльӑх пӑхакансем хушшинче социализмла ӑмӑрту мӗнле пынине кӑтартакан диаграммӑсем. Радиоприемник кӗрлесе ларать. Пӳлӗмсенче ҫӗнӗ будильниксем шаккаҫҫӗ; кӑмака хыҫне такам шӳтшӗн малтанхи ҫӗмрӗк сехете ҫакса янӑ, вӑл тахҫан кунта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекенсем мӗнле пурӑнни ҫинчен калакан музей экспоначӗ пекех туйӑнать. Койкӑсем хушшинчи тумбочкӑсем ҫинче кӗнекесем, тӗрлӗрен хаҫат-журнал.

— Пирӗн фермӑра ӗҫлекенсем, пурте тенӗ пекех, ҫич-сакӑр ҫул вӗреннӗ, ӗҫрен пушансан вӗсем вулама юратаҫҫӗ,—тет К. Ошманов.—Вуламалли ҫителӗклӗ: выльӑх-чӗрлӗх ӳстерме вӗренмелли кӗнеке-журналсем те, илемлӗ литература та пур, библиотекарь кунта тӑтӑшах килсе тӑрать. Культурӑллӑ пурӑнатпӑр. Пире лайӑх ӗҫлеме пур услови те туса панӑ.

Пӳртпе юнашарах — сад. Кунта ҫулла чӑн-чӑн кану паркӗ пулать. Шӗшкӗ тӗмӗсем хушшинче улмуҫҫисем, чие йывӑҫҫисем—мичуринла сортсем ӳсеҫҫӗ, кусене К. Ошманов хӑй лартса ӳстерет.

— Ферма сачӗ илемлӗ те, пуян та пулӗ,—тет вӑл.

Ферма картишӗ варринче кӑҫал тунӑ вите пысӑк вырӑн йышӑнса ларать. Эпир ӑшӑ та ҫутӑ витене кӗретпӗр. Коридор икӗ енӗпе аллӑ ултӑ ӗне тӑрать. Кусем пурте—колхозри телятницӑсем пӑхса ӳстернӗскерсем. Кашни ӗне тӗлне ун ятне ҫырса ҫапнӑ: Муза, Заря, Сирень, Чечек тата ҫавнашкал илемлӗ ятсем. Ӗнесем пӗр-пӗрне тӗксе амантасран вӗсен мӑйракисене вӗҫӗнчен татнӑ.

— Ӗнен сӗчӗ унӑн чӗлхи ҫинче, теҫҫӗ. Эпир ӗнесене лайӑх тӑрантаратпӑр,—тет Ошманов.—Кашни сӑвакан ӗнене хӗлле ҫакнашкал рационпа тӑрантаратпӑр: клеверпа суртри улӑмӗ 20 килограма яхӑн, сӗтеклӗ апат 20—22 килограмм, турантӑ—2 килограмм. Ӗнесене кунне тӑватӑ хутчен шӑваратпӑр, тӑватӑ хутчен усӑлма кӑларатпӑр. Кунне икке сӑватпӑр. Сӗт суса илесси эрнесерен ӳссе пырать. Халиччен ӗне ферминче сӗт нумайрах суса илессишӗн мар, ӗнесен шутне ӳстерессишӗн ҫеҫ тӑрӑшнӑ. Ун чухне сӗт пӑрусене тӑрантармалӑх кӑна пулнӑ. Халӗ эпир кунсерен, ҫу заводне тӑватҫӗр литр сӗт парса тӑнисӗр пусӗе, хӗрӗх литр колхозниксене сутатпӑр.

Сӗт суса илесси ҫулсерен ӳссе пыни ҫак цифрӑсенчен лайӑх курӑнать: 1951 ҫулта «Красный Октябрь» колхозра мӗнпур ҫӗрсен кашни 100 гектарӗ пуҫне 20 центнера яхӑн сӗт суса илнӗ пулсан, 1955 ҫулта вара—93 центнера яхӑн, урӑхла каласан, тӑватӑ хут ҫурӑ ытларах сӗт суса илнӗ. Ку вӑл планпа йышӑннинчен 18 центнер ытларах пулать. Ҫапла вара сӗт суса илес енӗпе иртнӗ ҫулта «Красный Октябрь» колхоз Муркаш районӗнче висҫӗмӗш вырӑна тухрӗ. 1956 ҫулхи январь уйӑхӗнче тата февраль пуҫламӑшӗнче колхоз сӗт суса илессипе районта пӗрремӗш вырӑнта пырать. Дояркӑсем Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XX-мӗш съезчӗ тӗлне кашни ӗнерен 700 литр сӗт суса илме сӑмах пачӗҫ, ӑмӑртса ӗҫлеме пикенчӗҫ.

Ӗне ферминче ӗҫлекен пултаруллӑ дояркӑсем—Евдокия Ошманова, Галина Слесарева, Нина Скворцова февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне хӑйсен сӑмахне срокчченех чыслӑн пурнӑҫларӗҫ, халӗ вӗсем мухтавлӑ партин XX-мӗш съезчӗ уҫӑлас куна тата пысӑкрах ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илме тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

— Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхӑн пуҫламӑшӗнче эпир кашни ӗнерен ҫулталӑкне те вӑтам шутпа 500—600 литр ҫеҫ сӗт суса илнӗ пулсан, халӗ виҫ-тӑватӑ уйӑхрах ун чухлӗ суса илме пултаратпӑр,—теҫҫӗ опытлӑ дояркӑсем. Вӗсем хӑйсен ҫитӗнӗвӗсемпе лӑпланса лармаҫҫӗ, тата тимлӗрех ӗҫлеҫҫӗ.

Ӗне витинчен тухсан, ферма заведующийӗ К. Ошманов пире пӑру витине илсе кӗртрӗ.

Витере таса та ӑшӑ, коридор урайне пӳртри пекех ҫуса тасатнӑ, лапӑрчӑк урапа пусма именмелле. Пӗчӗк пӳлӗмсенче ҫамрӑк пӑрусем икшерӗн-виҫшерӗн тӑраҫҫӗ, алӑксем ҫине вӗсен ячӗсене ҫырса ҫапнӑ. Ҫамрӑк телятница Ирина Атласкина пире хӑйӗн ӗҫӗпе паллаштарчӗ. Вӑл ҫиччӗмӗш класран вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн кунта ӗҫлеме тытӑннӑ, виҫӗ ҫул хушшинче 150 пӑру пӑхса ӳстернӗ. Хӑйӗн ӗҫне вӑл питӗ юратса, тӑрӑшса тӑвать, ӗҫри опычӗпе хӑйӗн юлташне Галина Щегловӑна паллаштарать, ӑна пулӑшса тӑрать.

— Эпир пӑхса ӳстерекен пӑрусем пӗри те ан вилччӗр, ан чирлеччӗр, ҫирӗп сывлӑхлӑ пулччӑр тесе тӑрӑшатпӑр,—теҫҫӗ хастарлӑ телятницӑсем.

Фермӑри ӗҫсене механизацилесе ҫитермен-ха. Халлӗхе кунта шыва ҫырмаран пичкепе турттараҫҫӗ, выльӑх апатне те ҫӗклемпе йӑтма тивет. Ку вара выльӑх пӑхакансен ӗҫне чылай йывӑрлатать.

— Килес ҫул ӗне фермичи ӗҫсене йӑлтах механизацилесе ҫитеретпӗр,—тет колхоз председателӗ Алексей Федорович Федоров коммунист. Колхозри фермӑсене вӑйлатассишӗн вӑл ырми-канми тӑрӑшать.

Ӗне ферминче часах ҫӗнӗ кормозапарник вырнаҫтарса лартаҫҫӗ. Килес ҫул кунта выльӑхсене шӑварма автопоилка пулать. Витесене, выльӑх апачӗ пӗҫермелли кухньӑна шыв хӑпартма ҫирӗм пилӗк лаша вӑйлӗ двигатель туяннӑ, ӑна мунчапа юнашар уйрӑм ҫӗнӗ ҫуртра вырнаҫтарнӑ, ҫавӑнтах арман та пулать.

— Халӑха ӗҫре хавхалантарма, ертсе пыма пӗлмелле—халӑх хавалӗ вара тем тума та, темле йывӑрлӑха ҫӗнтерме те пултарать. Пирӗн тумалли ӗҫсем нумай-ха: сысна, сурӑх, чӑх-чӗп фермисене те вӑйлатмалла, выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑша ӳстермелле, вара пур енӗпе те кӳршӗри Сталин ячӗпе тӑракан колхоза хуса ҫитме тӑрӑшмалла. Ҫавӑншӑн тӑрӑшатпӑр та,—тет Федоров юлташ.

Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Евтихий Андреевич «Красный Октябрь» артельре пулчӗ. Вӑл кунти ӗҫченсене хӑй ертсе пыракан колхозри ӗҫсемпе паллаштарчӗ, ик-виҫӗ ҫул хушшинчех пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх мӗнле ҫӗкленсе, вӑйланса кайни ҫинчен каласа пачӗ, уйрӑмах вӑл обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑша ҫине тӑрсах ӳстерме кирлине асӑрхаттарчӗ. «Красный Октябрь» колхоз членӗсем ҫитес ҫулсенчех тырпул тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑша вӑйлӑ ӳстерме сӑмах пачӗҫ.

КПСС XX-мӗш съезчӗ улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе паракан Директивӑсен проектне колхоз ӗҫченӗсем пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илчӗҫ, колхозниксене вӑл тата хытӑрах тӑрӑшса ӗҫлеме хавхалантарчӗ. Ял ӗҫченӗсем Коммунистсен партийӗн XX-мӗш съездне ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем туса саламлаҫҫӗ.

А. АРТЕМЬЕВ.
Н. ПЕТРОВСКИЙ.

Ял ҫыннисен культури ӳсет

Вӑрнар районӗнчи Пӑваялӗнче 1894 ҫулта шкул уҫнӑ. Октябрь уйӑхӗнче 20 ача пухрӗҫ те вӗренме пуҫларӗҫ. Ҫав ҫирӗм ача хушшинче анӗ те пулнӑ. Питӗ йывӑрччӗ вӗренме, тӑватӑ ҫул хушшинче учительсем ачасене пайтах патак ҫитерчӗҫ, вуниккӗн аран вӗренсе тухрӑмӑр. Ҫавна анӗ виличчен те манас ҫук.

Халӗ, совет саманинче, пирӗн ялта вӗренмен ҫын юмарӗ. КПСС XX-мӗш съезчӗ паракан Директивӑсен проектӗнче ҫитес пилӗкҫуллӑхра пурне те вунӑ ҫул вӗрентмелли йӗркене куҫма палӑртнӑ. Малашне вара ҫитес кӗске вӑхӑтрах ҫамрӑк колхозниксем вӑтам пӗлӳ илӗҫ. Пирӗн ялта халӗ аслӑ тата вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнӑ специалистсем те нумай: 17 учитель, 3 инженер, 4 врач, 10 медсестра, 2 акушерка, 8 тракторист, 4 ветеринар, 2 агроном т. ыт. те—пурӗ 68 ҫын. Вӑтам шкулта кӑҫал 70 ача, ҫӗршыври пысӑк хуласенчи аслӑ шкулсенче вуншар ҫамрӑк вӗренет.

И. КОРАКОВ.

ЧЕХОСЛОВАКИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНАЙ КОМИТЕЧӖН ПЛЕНУМӖ

ПРАГА, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Чехословаки телеграф агентстви ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗ: февралӗн 6—8-мӗшӗсенче Прагӑра Чехословакири Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн пленумӗ пулса иртнӗ.

Чехословакири Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн пленумӗ ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен Вратислав Крутина тунӑ доклада,—тӗнчери лару-тӑру тата Чехословакин тулашри политика тӗлӗшӗнчи задачисем ҫинчен Вильям Широкий тунӑ доклада сӳтсе явнӑ.

Ҫак докладсем тӑрӑх тивӗҫлӗ постановленисем йышӑннӑ.

Чехословакири Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн 1956 ҫулхи июнь уйӑхӗнче Чехословакири Коммунистсен партийӗн конференцине пухма йышӑннӑ.

ПОЛЬШӐН МЕТАЛЛУРГИ ПРОМЫШЛЕННОҪӖ

ВАРШАВА, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Варшава хулин ҫурҫӗр енче промышленноҫлӑ ҫӗнӗ район—Млочина районӗ саралса выртать. Нумаях пулмасть ҫак вырӑнта ҫеҫенхир пулнӑ. Халӗ кунта металлургин ҫӗнӗ предприятийӗн—пахаа хурҫӑ шӑратса кӑларакан «Варшава» заводӑн пысӑк корпусӗсем лараҫҫӗ. Заводӑн нумай цехӗсем ӗҫлеме пуҫланӑ. Часах ҫӗнӗ завод Польшӑри машинӑсем тӑвакан предприятисене хӑйӗн продукцине нарса тӑма тытӑнать.

Ултӑҫуллӑх вӑхӑтӗнче Польшӑра металлургин икӗ пысӑк предприятийӗ—Ҫӗнӗ Гутӑри В. И. Ленин ячӗпе тата Ченстоховри Болеслав Берут ячӗпе тӑракан комбинатсем ӗҫлеме пуҫланӑ.

Металлургин ҫӗнӗ предприятийӗсене туни тата киввисене пысӑклатни хурҫӑ, чугун, прокат, коке туса кӑларассине кӗске вӑхӑт хушшинчех нумай ӳстерме май панӑ. Хальхи вӑхӑтра Польша Халӑх Республики хурҫӑ, вӑрҫӑченхипе танлаштарсан, 3,5 хут нумайрах шӑратса кӑларать. Чугунпа прокат туса кӑларасси те темиҫе хут ӳснӗ. Вӑрҫӑччен ҫӗршывра ҫулталӑк хушшинче шӑратса кӑларнӑ хурҫӑ пӗр ҫын пуҫне 41 килограмм тивнӗ пулсан, халӗ вара унӑн хисепӗ 175 килограма ҫитнӗ.

Ултӑҫуллӑхра тӗслӗ металлурги те чылай вӑйланнӑ.

Польша халӑх хуҫалӑхне аталантармалли ҫӗнӗ пилӗк ҫуллӑх планра металлурги производствине татах та пысӑклатма палӑртнӑ. 1960 ҫулта—пилӗкҫуллӑхӑн юлашки ҫулталӑкӗнче—Польша 7 миллион тонна хурҫӑ шӑратса кӑлармалла.

БОЛГАРИРЕ ҪӖНӖ ЗАВОД ЛАРТНӐ

СОФИЯ, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Кивӗ Загора хулинче ҫӗр мамӑкне тасатакан ҫӗнӗ завода ӗҫе янӑ. Ку завода Совет Союзӗ пулӑшнипе туса лартнӑ. Ҫӗнӗ завод нӳрӗ ҫӗр мамӑкне тинӗтсе тасатать, унӑн вӑрлӑхне тасатать. Икӗ сменӑпа ӗҫленӗ чухне завод кашни ҫулах 15 пин тонна чӗрӗ ҫӗр мамӑкне тинӗтсе тасатма пултарать.

Ҫӗнӗ завода ӗҫе янӑ ятпа Кивӗ Загора хулинче митинг пулнӑ. Унта ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес ӗҫӗн министрӗ Р. Христозов тата ССР Союзӗн Болгарири суту-илӳ представителӗ А. Е. Ерохин сӑмах туса каланӑ.

КИТАЙРИ ХРЕСЧЕНСЕМ ХУШШИНЧЕ ХУТ ПӖЛМЕНЛӖХЕ ПӖТЕРЕҪҪӖ

ПЕКИН, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). «Гуанминжибао» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Китайӑн нумай провинцийӗсенче хутла пӗлменнисене вӗрентме курссем уҫнӑ. Ҫавӑн пек курссенче халӗ 42.600 пин хресчен вӗренет, вӗсен йышӗ халӗ пӗлтӗрхинчен икӗ хута яхӑн нумайрах. Хут вӗренме ҫӳрекенсен йышӗ пӗрмаях ӳссе пырать.

Пурне те хутла вӗрентмелли плансене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Пекин сывӑхӗнчи районсенче халӗ хутла пӗлменнисенчен 94 проценчӗ, 120 пин ҫын ытла курссенче вӗренет

МАЛАЙЯ ФЕДЕРАЦИНЕ НИКАМА ПӐХӐНМАСӐР ПУРӐНМАЛЛИ ПРАВО ПАРАССИ ҪИНЧЕН ПЫНА КАЛАҪУСЕМ ВӖҪЛЕННӖ

ЛОНДОН, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Лондонра Малайя федерацийӗн влаҫӗсемпе Англи правительстви хушшинчи калаҫусем вӗҫленнӗ. Калаҫусем вӑхӑтӗнче Англи колонине—Малайя федерацине никама пӑхӑнмасӑр пурӑнмалли право парасси ҫинчен сӳтсе явнӑ. Малайя халӑхӗ хӑйӗн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн тахҫантанпах кӗрешнине, юлашки вӑхӑтра пур колонисемпе пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенче те наци ирӗклӗхӗшӗн пыракан кӗрешӳ ҫав тери вӑйланнине пула Англи ирӗксӗрех ҫав калаҫусене ирттермешкӗн килӗшнӗ.

Англи правительствин ирӗксӗрех Малайя федерацине 1957 ҫулхи август уйӑхӗнчен пуҫласа никама пӑхӑнмасӑр пурӑнмалли право пама килӗшмелле пулнӑ. Каласса татӑлнӑ тӑрӑх, Малайя никама пӑхӑнмасӑр пурӑнмалли право илнӗ хыҫҫӑн Британи ҫӗршывӗсен пӗрлешӗвне кӗмелле тата Англипе пӗр-пӗрне хӳтӗлесси тата пулӑшасси ҫинчен договор тумалла. Тата Англин Малайӑра хӑйӗн ҫарӗсене тытса усрама право пулмалли ҫинчен каласса татӑлнӑ.

Малайя валли конституци туса хатӗрлеҫҫӗ, ӑна хатӗрлеме Канада, Австрали, Цейлон тата Британие кӗрекен ытти ҫӗршывсем хутшӑнаҫҫӗ. Ҫак конституцие хатӗрленӗ ҫӗре Малайя федерацийӗн представителӗ хутшӑнмасть.

Совет Союзӗпе Польша хушшинчи суту-илӳ

1956 ҫулхи февралӗн 8-мӗшӗнче Совет Союзӗпе Польша хушшинче суту-илӳ тӑвасси ҫинчен пынӑ калаҫусем ӑнӑҫлӑ вӗҫленнӗ. ССР Союзӗпе Польша Халӑх Республики 1956 ҫулта пӗр-пӗрне мӗнле таварсем тӑратасси ҫинчен протокол ҫырса алӑ пуснӑ.

Совет Союзӗ Польша Халӑх Республикине ҫакӑн пек таварсем тӑратать: тимӗр, марганец тата хром рудисем, ҫӗр мамӑкӗ, нефть тата нефть продукчӗсем, промышленность валли кирлӗ хӑшпӗр оборудовани, суднӑсем тумалли хурҫӑ листасем, тӗслӗ металсем, ферросплавсем, удобренисем, химикатсем тата ытти таварсем.

Польша Халӑх Республики Совет Союзне ҫакӑн пек таварсем тӑратать: пассажирсем илсе ҫӳремелли, грузсем турттармалли тата пулӑ тытса ҫӳремелли тинӗҫ суднисем, чугун ҫул вагонӗсем, ҫӗр кӑмрӑкӗ, цинк, сахӑр, ҫӑм тата йӗтӗн пиравӑр, ытти йышши таварсем.

Сывлӑш шарӗсем яни ҫинчен Албани хаҫачӗ мӗн ҫырать

ТИРАНА, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). «Зери и популлит» хаҫат Америкӑри «сивӗ вӑрҫӑшӑн» тӑракансен киревсӗр ӗҫӗсене—халӑх демократи ҫӗршывӗсене сывлӑш шарӗсем ярса, вӗсен гражданӗсемшӗн хӑрушлӑх туса хунине сивлет.

США тата ун майлӑ тӑракансем ытти государствӑсен территорийӗсене сывлӑш шарӗсем яраҫҫӗ, ҫапла туни вӑл тӗнчери ҫӗршывсен пуринишӗн те паллӑ правине пасни, ООН Уставӗ тӑрӑх урӑх ҫӗршывсен шалти ӗҫӗсене хутшӑнас марри ҫинчен йышӑннӑ обязательствӑсене пасни пулать, тесе ҫырать «Зери и популлит» хаҫат. Камсем тӗнчери лару-тӑрӑва пур майсемпе те йывӑрлатма тата малашне те «сивӗ вӑрҫӑ» ҫулӗпе кайма хӑтланаҫҫӗ, ҫавсем кӑна кун пек провокацилле ӗҫсем тума пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пек ӗҫсем тӳрӗ кӑмӑллӑ мӗнпур ҫынсене тарӑхтараҫҫӗ, тет хаҫат.

США тата ун майлисем сувереннӑй государствӑсен шалти ӗҫсене хутшӑнас политика тытса пыраҫҫӗ, ҫав политика пурнӗрех путланса ларма пӳрнӗ. Албани халӑхӗ нихҫан та урӑх ҫӗршывсене хӑйӗн шалти ӗҫӗсене хутшӑнма парас ҫук. Вӑл хӑй ҫӗнсе илнисене сыхлама тата тӗреклетсе пыма, мирпе демократи тата социализм лагерӗнчи мӗнпур ҫӗршывсемпе пӗрле ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне кайма хатӗр, тесе ҫырать хаҫат.

Америкӑри хаҫат США вӗҫтерсе яракан сывлӑш шарӗсем ҫинчен

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫат корреспонденчӗ Вашингтонран пӗлтернӗ тӑрӑх, США сывлӑш-ҫар вӑйӗсен командованийӗ ҫакна йышӑннӑ: юлашки уйӑхра сывлӑш-ҫар вӑйӗсем ҫавнашкал «метереологи» шарӗсене 500 шар вӗҫтерсе янӑ, тенӗ. Совет Союзӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх ҫакӑ паллӑ: ҫав шарсем Совет Союзӗн сывлӑш пространствине вӗҫсе ҫитнӗ.

Ҫак вӑхӑтрах «Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн ҫар енӗпе ӗҫлекен обозревателӗ Хенсон Болдуин ҫапла ҫырать: ку шарсем, «метеорологи» тӗллевӗсене пурнӑҫланисӗр пуҫне, ытти тӗрлӗ нумай ӗҫсем те тӑваҫҫӗ. Ҫав шарсене «разведка тума» вӗҫтере-вӗҫтере янине кӑтартса парса, Болдуин ҫапла ҫырать: «Ҫакнашкал шарсем ҫине фотоаппаратсем, радарсем тата телевидени аппарачӗсем вырнаҫтарса лартма пулать, вӗсем хӑйсен базине ҫӗнӗ сведенисем пухма та пулӑшаҫҫӗ».

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тулашри политики ҫинчен

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Колумби университетӗнче философи ыйтӑвӗсем тӑрӑх тунӑ лекцире Америкӑри паллӑ обществӑлла деятель тата публицист Корлисс Ламонт, США-н тулашри политикине критиклесе, ҫапла каланӑ: Даллес «Америка историйӗнчи чи начар государство секретарӗсенчен пӗри» пулса тӑрать, тенӗ. Даллесӑн ҫак вырӑнтан пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах тухмалла, тесе кӑтартса панӑ вӑл.

Ламонт ҫакна палӑртнӑ: пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнасси тата тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлесси ҫинчен договор тӑвас тӗлӗшпе Совет Союзӗ панӑ сӗнӗве Пӗрлешӳллӗ Штатсен йышӑнас пулать. Китай Халӑх Республикин представителӗсене Пӗрлешнӗ Нацисен Организацине кӗртес пулать.

Пӗтӗм тӗнчери мире ҫирӗплетес тӗлӗшпе Ламонт ҫапла тума сӗннӗ: Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе СССР хушшинче хӗҫпӑшалсене чакарасси ҫинчен килӗшӳсем тума; Германие нейтралитет тытакан ҫӗршыв туса пӗрлештерме; Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗ пулӑшнипе Израиль тата араб государствисем хушшинче хутшӑнусене мирлӗн йӗркелеме; ССР Союзӗпе США хушшинче пӗр-пӗрин культурипе ытларах паллашмалла тума; Азипе Африкӑра колониализма пӗтерме.

Эйзенхауэр президент ирттернӗ пресс-конференци

ВАШИНГТОН, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Вашингтонри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Эйзенхауэр президент паян пресс-конференци ирттернӗ. Вӑл Совет Союзӗн премьер-министрӗпе Булганинпа пӗр-пӗрин пагне ҫырусем ярса илес ӗҫе малалла туса пырасси ҫинчен, Америкӑн мирлӗ пурнӑҫ тума пур майсемпе те усӑ курма кирли ҫинчен каланӑ. Президент каланӑ тӑрӑх, вӑл Булганинӑн юлашки ҫырӑвӗ ҫине памалли ответа хатӗрлесе ҫитереймен-ха.

Эйзенхауэртан пӗр корреспондент вӑл Иден премьер-министрпа Вӑтаҫӗр-Хӗвелтухӑҫ ыйтӑвӗпе калаҫнин результачӗсене хак пама ыйтсан, президент ҫапла каланӑ: Вӑтаҫӗрти Хӗвелтухӑҫӗнче вӑрҫӑ пуҫланассине чарса лартас тӗлӗшпе манран килекен пур ӗҫсене те тума тӑрӑшӑп, тенӗ.

Шалти политика ыйтӑвӗсем ҫинчен каласа, Эйзенхауэр хӑйне ҫӗнӗрен США президентне суйлассипе килӗшессипе килӗшес марри ҫинчен каярах, ҫак уйӑх вӗҫӗнче, кирлӗ чухлӗ информаци пухнӑ хыҫҫӑн, каласа пама пулнӑ.

ЭЙЗЕНХАУЭР ПРЕЗИДЕНТ США КОНГРЕСНЕ ЯНӐ ПОСЛАНИ

ВАШИНГТОН, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Эйзенхауэр президент паян США конгресне послани янӑ. Унта США-на урӑх ҫӗршывсенчен пыракан ҫынсене йышӑнмалли йӗркене улӑштарма кирли ҫинчен каланӑ. Хальхи закон тӑрӑх США-на пурӑнма куҫакансен е США-на пӗр-пӗрин идейисемпе, культурипе паллашма тата суту-илӳ ӗҫӗсем енӗпе вӑхӑтлӑха пыракансен пӳрнисен йӗрӗсене хут ҫине ӳкерсе илмелли, уйтан кӑна ҫӗршыва пырса кӗме ирӗк памалли йӗрке пулнӑ. Президент хӑйӗн посланийӗнче ҫак йӗркене улӑштарма сӗнет.

США АНГЛИЕ ПУР ҪӖРШЫВСЕНЧЕН ТЕ ЫТЛӐРАХ ТАВАР ТӐРАТАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчӗ Вашингтонран пӗлтернӗ тӑрӑх, Пӗрлешӳллӗ Штатсен Суту-илӳ министерстви США 1954 ҫулта Англие тавар нумай тӑратакан тӗп ҫӗршыв пулни, ҫак енӗпе Канада вырӑнне йышӑнни ҫинчен пӗлтернӗ.

Пӗрлешӳллӗ Штатсенчен Англие 1953 ҫулта 711 миллион долларлӑх тавар сутнӑ пулсан, 1954 ҫулта унта 792 долларлӑх тавар тӑратнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех Канада Англие тавар тӑратасси чакнӑ, вӑл 1953 ҫулта Англие 852 миллион долларлӑх, 1954 ҫулта вара 765 миллион долларлӑх тавар тӑратнӑ.

Хӗвеланӑҫӗнчи державӑсем хӑйсен ҫарӗсене тытса тӑма Федеральнӑй Германи Республикинчен малашне те укҫа-тенкӗ илесшӗн

БОНН, февралӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Парижра тунӑ килӗшӳсем тӑрӑх, Федеральнӑй Германи Республикин правительстви хӗвеланӑҫӗнчи державӑсен Хӗвеланӑҫ Германири ҫарӗсене тытса тӑма 1956 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗччен 3,2 миллиард марка тӳлеме обязательство илнӗ. Ҫак тӳлев вӑл, Хӗвеланӑҫ Германи ҫарне туса йӗркелес ӗҫре Федеральнӑй Германи Республикин бюджечӗ тӑрӑх расходлама официальнӑй йӗркепе палӑртнӑ 5,8 миллиард маркӑпа пӗрле, Федеральнӑй Германи Республики Ҫурҫӗр Атлантика союзне «оборона валли» хывакан укҫа пулать, тесе пӗлтернӗ.

Ӗнер хӗвеланӑҫӗнчи державӑсем Федеральнӑй Германи Республикин Правительствине нота панӑ, Америкӑн, Англин тата Франции Хӗвеланӑҫ Германири ҫарӗсене тытса тӑма пухакан расхочӗсене Федеральнӑй Германи Республикин 1956 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗ хыҫҫӑн та пӗр ҫулталӑк хушши тӳлесе тӑмалла, тенӗ.

Ҫакӑншӑн «союзниксене» хытӑ критиклесе, Хӗвеланӑҫ Германири хаҫатсем ҫапла кӑтартса параҫҫӗ: кунта Федеральнӑй Германи Республикин сахалтан та тепӗр 2,4 миллиард марка тӳлемелли ҫинчен сӑмах пырать.

Хӗвеланӑҫӗнчи державӑсен ҫак требованийӗ вӑл, Ҫурҫӗр Атлантика союзӗн ытти членӗсемпе танлаштарсан, Федеральнӑй Германи Республикине ыттисенчен каярах хунине пӗлтерет, тесе ҫыраҫҫӗ хаҫатсем. «Хӗвеланӑҫӗнчи державӑсен требованийӗ,—тенӗ паян «Генераль-анцейгер» хаҫатра,—ҫакна кӑтартса парать: вӗсемшӗн оккупаци вӑхӑтӗнчи мелле условисене пӑрахӑҫлама питӗ йывӑр иккен».

Ф. М. ДОСТОЕВСКИЙ ВИЛНӖРЕНПЕ 75 ҪУЛ ТУЛТАРНӐ ЯТПА КОЛОННӐЛЛА ЗАЛРА ИРТТЕРНӖ ВЕЧЕР

Вырӑссен аслӑ писателӗ Федор Михайлович Достоевский вилнӗренпе 75 ҫул тултарнӑ ятпа февралӗн 9-мӗшӗнче Союзсен Ҫурчӗн Колоннӑллӑ залӗнче чаплӑ вечер ирттернӗ. Писатель вилнӗ куна, Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ чӗннипе, совет ҫыннисемпе пӗрле малта пыракан пӗтӗм этемлӗх паллӑ тӑвать.

Вечера Мире сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗ, ССР Союзӗнчи писательсен союзӗ, СССР Наука академийӗ, СССР Культура министерстви тата урӑх ҫӗршывсемпе культурӑллӑ ҫыхӑну тытас тӗлӗшпе ӗҫлекен Пӗтӗм Союзри общество организациленӗ.

Зала столица общественноҫӗн нумай представителӗсем, ҫавӑн пекех урӑх ҫӗршывсенчи литераторсем пуханнӑ.

Хӑнасем хушшинче—Мускаври дипломатилле представительствӑсен пуҫлӑхӗсем, урӑх ҫӗршывсен посольствисемпе миссийӗсен сотрудникӗсем.

Президиумра—Мире сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗн председателӗ Н. С. Тихонов, ССР Союзӗнчи писательсен союзӗн правленийӗн пӗррмӗш секретарӗ А. А. Сурков, академиксем И. И. Артоболевский, В. В. Виноградов, Украина ССР Наука академийӗн действительнӑй членӗ Н. К. Гудзий тата ыттисем.

Президиумра ҫавӑн пекех Достоевский ачин ачи, Ленинградра ӗҫлекен инженер А. Ф. Достоевский пулнӑ.

Вечера уҫнӑ чухне А. А. Сурков Достоевскин творчествӑлла генийӗ ҫав тери пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулни ҫинчен, унӑн чи лайӑх произведенийӗсем тӗнче культурин пуянлӑхӗ пулса тӑни ҫинчен каланӑ.

Ф. М. Достоевский творчестви ҫинчен В. В. Ермилов профессор доклад туса панӑ.

Доклад хыҫҫӑн искусство мастерӗсен концерчӗ пулнӑ. Вӗсем Ф. М. Достоевский произведенийӗсен сыпӑкӗсене вуласа панӑ. (ТАСС).

ДОСТОЕВСКИЙ ВИЛНӖРЕНПЕ 75 ҪУЛ ТУЛТАРНИНЕ ПАЛЛА ТУНИ

Вырӑссен паллӑ писателӗ Ф. М. Достоевский вилнӗренпе 75 ҫул тултарнӑ май февралӗн 9-мӗшӗнче Мире хӳтӗлес енӗпе ӗҫлекен республикӑри комитет, Чӑваш Совет писателӗсен правленийӗ, Чӑвашоблпрофсовет тата Политикӑлла тата наукӑлла пӗлӳсем сарас енӗпе ӗҫлекен Пӗтӗм Союзри обществӑн республикӑри уйрӑмӗ пуху ирттерчӗҫ. Пухӑва Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем, шкулсемпе техникумсенче тата институтсенче вӗренекенсем пухӑнчӗҫ.

Паллӑ писателӗн Достоевскийӗн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен Чӑвашпединститучӗн преподавателӗ Мальцев юлташ доклад туса пачӗ.

Е. И. ИВАНОВАНА «АЧА АМӐШӖ-ГЕРОИНЯ» ЯТНЕ ПАНӐ

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн 1956 ҫулхи февралӗн 7-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Чӑваш АССР-ӗнчи, Тӑвай районӗнчи Улянкӑ ялӗнчи Елена Ивановна Ивановӑна Ленин орденӗпе наградӑласа, «Ача амӑшӗ-героиня» хисеплӗ ят памалла тунӑ.

НАЛОГ УКҪИНЕ СРОКЧЕН ПАРСА ТАТАҪҪӖ

ЧКАЛОВСКИ. Партин XX-мӗш съездне хатӗрленнӗ май ӗҫсыннисем государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен татма тӑрӑшаҫҫӗ. Туҫа ял Советне кӗрекен Киров ячӗпе тӑракан колхозри 96 хуҫалӑх кӑҫалхи ялхуҫалӑх налогне извещени илнӗ хыҫҫӑнах пӗтӗмпех парса татнӑ.

Кунта налог агенчӗ В. Шайкин юлташ тӑрӑшнипе пӗррмӗш кварталти финанс планне февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне 121 процент тултарчӗҫ.

И. МАРКОВ.

СЕНТЕРВӐРРИ. «Молния» ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем, КПСС XX-мӗш съездне ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн кӗрешсе, хӑйсен парӑмӗсене срокчен тӳлеҫҫӗ. Ҫак кунсенче ялхуҫалӑх налог укҫине пухаҫҫӗ. В. Гойко 216 тенкӗ, Егоров — 224 тенкӗ, Конькова—208 тенкӗ, Галкина—216 тенкӗ тӳлерӗҫ. Вӗсемпе пӗрлех ытти хӑшпӗр хуҫалӑхсем те налог укҫине срокчен тӳлесе татрӗҫ.

Ҫавӑн пекех колхозниксен хуҫалӑхӗсем государствӑна 1956 ҫулшӑн аш-какай, сӗт-ҫу срокчен параҫҫӗ.

П. ГЕРАСИМОВ.

ҪӖНӖ ПЕРЕКЕТ КАССИ

Январь уйӑхӗнче трактор пайӗсем тӑвакан завод территорийӗнче 60/025-мӗш номерлӗ ҫӗнӗ перекет касси уҫӑлнӑ. Ку перекет касси унти ҫыхӑну уйрӑмӗн ҫуртӗнче вырнаҫнӑ.

Шупашкарти ҫыхӑну кантурӗ ҫумӗнчи 60/01-мӗш перекет касси кашни кунах смена ҫурӑ (ирхине 9 сехетрен пуҫласа каҫхине 8 сехетчен) ӗҫлеме тытӑнчӗ. Кунта халӗ ӗҫсыннисем канмалли кунсенче те ҫӳреҫҫӗ. Электроаппаратура завод территорийӗнче пулнӑ 60/020-мӗш перекет кассине ҫӗнӗрен тунӑ лайӑх ҫурта, халӑх нумай ҫӳрекен вырӑна, куҫарнӑ. Ку перекет касси ирхине 11 сехетрен пуҫласа каҫхине 8 сехетчен ӗҫлет.

Редактор заместителӗ П. Н. НИКОЛАЕВ.

ТЕАТР

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ февралӗн 11, 12, 14-мӗшӗсенче вырӑсла ҫӗнӗ спектакль «Кремлевские куранты». Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуҫланаҫҫӗ. Спектакле ушкӑнпа курма заявкӑсем йышӑнаҫҫӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, обзорсен пайӗ—6-84, пропаганда пайӗ—5-21, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—3-04, совет строительстви пайӗ—3-04, литературӑпа искусство пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—3-54, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00041 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 573. Тираж 37.000 экз.